Çывăх тăванĕнчен уйăрса килсĕр хăварнине манаймасть вăрçă ветеранĕ • 5 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

39(857) №, 2014, авăн, 27

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**Петĕр Эйзинăн позийĕнче тĕп вырăнта – хĕвел. Вăл хăй те тавралăх çуталнă вăхăтра çут тĕнчене килнĕ.** 2 стр.

**Ачишĕн укçа паман хĕрарăм прокуратурăна çитнĕ.** 3 стр.

**Чăх-чĕп мĕншĕн кўрше каçать-ши?** 10 стр.

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам звонить по тел. 8-967-478-06-12, 28-83-64, 56-04-17.

*Килĕмре пăтă та çăра.*

Категория: Каларăш.

## «Ача çуртĕнче юлмастăп, атте-анне патне каятăп»



4 стр.

М.ТУМАЛАНОВА сăн ўкерчĕкĕ.

**"Пирĕн килте юсав ĕçĕсем вĕçленмен-ха. Залта йышăнăпăр сире", – терĕ Надежда Владимировна телефонпа çыхăнсан. Тепĕр кунхине Çĕрпў районĕнчи Янтушри Андреевсем патне çитсе те тухрăм. Вĕсем 6 ача çитĕнтереççĕ. Тăван мар пепкесемшĕн чун ăшшине шеллемеççĕ Владимир Валентиновичпа Надежда Владимировна. Вĕсемшĕнех çĕнĕ ĕç пуçлама, малалла талпăнма, пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерме хатĕр килĕшўллĕ çак мăшăр. Чăн та, ача сассипе тулнă кил-çуртра кăна телей хуçаланать.**

**Сергей, Саша, Надя, Женя вăрмана мăйăра кайнăччĕ. Хăна килнине пĕлсен хăвăртах каялла таврăнчĕç вĕсем. Иртенпех чупса-выляса ывăннă Арина çывăратчĕ. Хĕр ача тахăш самантра вăранса амăшне ыталаса илчĕ. Мĕн чухлĕ ăшă сăмах тупрĕ ун валли хĕрарăм. Пĕчĕкскер чылайччен ачашланчĕ. Ăна курса Надя та амăшĕ патнех пырса ларчĕ. Унччен те пулмарĕ, 1-мĕш класра вĕренекен Юрий çитсе кĕчĕ. Хăтлă çак йăвара пурăнакансене такам та ăмсанать ахăр.**

### Тухтăр хушман

"Чĕре чирĕпе аптăранăран мана тухтăрсем ача çуратма хушман. Уншăн пăшăрханнă паллах. Нумай шухăшланă хыççăн упăшкана ача усрава илме сĕнтĕм. Вăл хирĕçлемерĕ. Кирлĕ документсен списокне тишкертĕмĕр те – кулянса ўкрĕмĕр. Пирĕн, сутуçăпа водителĕн, шалу та, пўрт-çурт та пысăках мар", – каласа кăтартать Надежда Владимировна. Юрать-ха районти опека органĕн специалисчĕсем нумай пулăшнă вĕсене. "Пысăках мар пўртре хăтлă, таса, тирпейлĕ", – çакнашкал пĕтĕмлетў тунă ятарлă комисси. Андреевсене хăйсен çунатти айне 2 ача илме ирĕк панă.

### Надьăна Швецие илсе кайнă

Çак хыпарпа çунатланнă мăшăр тĕпренчĕксем шыраса Шупашкара çитнĕ. "Ун чухне Ача çуртĕнче уяв йĕркеленĕччĕ. Пире те зала кĕртсе лартрĕç. Сцена çинчи пĕр арçын ача куç тĕлне пулчĕ. Ăна, сăпайлăскерне, пурте тĕкеççĕ. Вăл пуçне чиксе тăрать. Хĕрхентĕмĕр çав ачана.

### ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 27.09 | +17 | + 8 | |
| 28.09 | +13 | + 9 | |
| 29.09 | +13 | + 6 | |
| 30.09 | +12 | + 9 | |
| 01.10 | + 8 | + 6 | |
| 02.10 | + 6 | + 3 | |
| 03.10 | + 7 | + 3 | |



**ÇЫРАВÇĂ ЧĔНЧĔ ХĂНАНА**

# Вулаканра çынлăха вăратасшăн

**Унăн «Савни юррисем» кĕнеки яланах ĕç сĕтелĕ çинче выртать. Чун канăçсăрланнă, ăш вăрканă чухне уçса вуламашкăн. Хама килĕшекен сăвă йĕркисене пăхмасăр вĕренетĕп. Аякри çула тухсан аса илсе шухăша путма, уявсенче кичемленесрен тантăшăмсене юрату сăввисем вуласа пама. Кĕнекери вăрттăн вăй-хăват, шăплăхпа черченлĕх, ăшă варкăш илĕртсе тыткăна илет. Чунри тасалăха, сăпайлăха упрама, умри илеме хӳтĕлеме, тепĕр майлă калсан, тĕрĕс пурăнма чĕнет поэт.**

**– Эйзин сăвви, чăваш поэзине уçă варкăш пек вăркăнса кĕнĕскер, сывлăм тумламĕ пек тасаскер, юр пĕрчи пек ачашскер пулнă. Унăн хăйĕн тĕнчи, унти пулăмсем хăйсен чĕлхипе пуплеççĕ. Сăвăç çав чĕлхене ăнкарать, пире валли те куçарса парать: лăпкă та таса савăшу чĕлхине, çут çанталăк чунне туйма унăн сăввисене вуласа вĕренеттĕмĕрччĕ. Пуян, чаплă çынсенчен пăрăнать вăл. Чухăнсемпе, мĕскĕнсемпе – ĕмĕртен пыракан чăн-чăн поэт йăлипе – пĕрле пуласшăн, – тесе çырать Атнер Хусанкай.**

**Сăвăçпа тахçанах тĕл пулма калаçса татăлнăччĕ. Çу кунĕсенче ялта, дачăра ĕçĕ нумай пулнăран Петр Егоровича чăрмантарас килмерĕ. Таврара ылтăн кĕркунне хуçаланнă май вăхăчĕ унăн халĕ те сахал. Пахчинче ĕçĕ туллиех. Мăнукĕсене пăхмалла. Çапах та çак кунсенче юратнă поэтпа тĕл пулма вăхăт тупрăмăр.**



**Петĕр Эйзин /Петр Егорович Димитриев/ 1943 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Энехмет ялĕнче çуралнă. 1965 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕр вăхăт Шăмăршă тăрăхĕнче чăваш чĕлхи вĕрентсе пурăннă. Хĕсметрен таврăннă хыççăн Тракри «Ял пурнăçĕ» район хаçатĕнче ĕçленĕ. Малтанах литература ĕçченĕ, кайран яваплă секретарь пулнă. 1968 çулта Шупашкара куçса килнĕ. 2005 çулччченех Чăваш кĕнеке издательствинче вăй хунă, корректортан тĕп редактора çитнĕ.**

**1962 çултанпа пичетленет. «Виçĕ хĕлĕх» кĕнекери «Çураçу» ятлă сăввисен ярăмĕ чăваш поэзинче хăйне евĕрлĕ те çĕнĕ сасăллă сăвăç килнине пĕлтернĕ.**

**П.Эйзин – 1980 çултанпа Раççей писателĕсен союзĕн членĕ. 1994 çулта ăна Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă. 1997 çулта вăл Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ премине тивĕç пулнă.**

**Унăн çакăн пек сăвă кĕнекисем пичетленсе тухнă: «Кăвайт» /1976/, «Сар хĕвел» /1979/, «Çĕмĕрт çути» /1980/, «Тилĕ тус» /1983/, «Анне пехилĕ» /1986/, «Юлашки çил-тăман» /1991/, «Савни юррисем» /2003/, «Упа кермени» /2008/, вырăсла «Весенняя капля» /1982/, «Костер сквозь снег» /2003/.**

## Усрав ача

Йышлă çемьере çуралнă вăл. Димитриевсен икĕ ачи тĕрлĕ чире пула пĕчĕккĕллех вилнĕ, тепĕр улттăшĕ вара йĕркеллех çитĕннĕ. Ашшĕ чирлĕ пулнă, çавăнпа та ăна Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине илсе кайман. Унăн йăмăкĕн Ультуттин ача пулман. Хирĕçех пурăннă вĕсем. Ультуттипе мăшăрĕ хистесех ыйтнипе ывăлне Петĕре усрава парас тенĕ. Пĕрремĕш класра пулнă вăл ун чухне. – Пускапипе пускатти патĕнче лайăх пурăннă эпĕ. Аппа-пиччесене тата йăмăксене кашни кунах курса тăнă, пĕрле вылянă. Пĕртте кичем пулман. Хама вĕсем патĕнче ют çĕрти пек туйман. Пускатти, Алексей Михайлович Михайлов, ĕмĕр тăршшĕ тракториста ĕçленĕскер, халĕ те пурăнать. Вăл маншăн тăван атте вырăнĕнчех. Элĕк тăрăхĕнчи Энехмете, хам ӳснĕ киле, час-часах кайса çӳретĕп, – тет Петр Егорович.

## Тĕп вырăнта – хĕвел

Шкулта вĕреннĕ чухне çырсах кайман вăл. 1960 çулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне чăваш-вырăс уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Студентсен литература кружокĕ вăйлă ĕçленĕ ун чухне. Çакăнта пултарулăх аталанма пуçланă та унăн. Малтанхи сăввисем 19 çулта чухне кун çути курнă. Кайран Эйзина тăрук пичетлеме пăрахнă. Н.Хрущев самани вĕçленсен ирĕклĕх хумĕ вăраха пырайман. Писатель-поэтсене каллех хĕстерме тытăннă.

– Ирĕклĕ сăвăсем çырма пуçларăм та, ку сăвă мар теме тытăнчĕç. Писательсен союзĕнче ĕçлекенсем /Николай Дедушкин, Аркадий Ĕсхĕл, Уйăп Мишши/ ман сăвăсене йышăнмастчĕç. Чун хурланнипе тата ытларах шăрçалама пуçларăм. Юлташсене килĕшетчĕ те. Пĕррехинче Г.Айхин «Аттесен ячĕпе» кĕнеки алла лекрĕ. Туянтăм. Унăн сăввисемпе паллашнă хыççăн тинех куçăм уçăлчĕ, – çамрăк чухнехине аса илчĕ Петĕр Эйзин.

Малтанхи сăввисене вăл Çеçпĕл Мишши, Владимир Маяковский, Геннадий Айхи евĕрлĕрех çырма тăрăшнă. Салтакра та алран калем яман. «Пуçламăшĕ» поэма хĕсметре çуралнă.

«Эйзин вулаканра çынлăха вăратасшăн. Чун пирки, шалти тĕнче пирки аса илтересшĕн, Поэт хăйĕн сăввисене ăшра вулама ыйтать», – тесе çырать ун пирки Юрий Яковлев «Эй, çын!» /Петĕр Эйзинăн ачашлăх метафизики/ статйинче. «Тăван Атăл» /2013, çурла уйăхĕ/.

Унăн пултарулăхĕнче тĕп вырăнта – хĕвел. Вăл ăшă, çутă. Хĕвел пулсан пурнăç та пур апла. «Анне мана ир-ирех, хĕвел тухнă чухне çуратнă. Темле çыхăну пурах пуль. Сăвă йĕркисенче ахальтен сăнланмасть апла хĕвел», – тет поэт. Ыттисенчен уйрăлса тăнипе, хăйне евĕрлĕхпе тыткăнлаççĕ Эйзин сăввисем. Тĕрленчĕкĕсенче ирĕклĕ тата традициллĕ сăвă пĕр-пĕрипе черетленсе пыраççĕ. Малти тата шалти рифмăсем пур. Малтанхи сăмахĕ хыçалтипе рифмăланать.

## Чун тĕрĕслĕх енне туртать

– Чун ăçталла туртать, çавăнталла каятăп. Сăвăсене хама ирĕксĕрлесе, асаплантарса мар, яланах чун туртнипе кăна çырнă, – тет Петр Егорович. Ку вăл сăввисене вулнă май уççăнах палăрать. Хитре сăмахсем чĕререн тухаççĕ çав.

Юлашки вăхăтра Петĕр Эйзин аса илӳ ытларах çырать. Вĕсем «Тăван Атăл», «Лик Чувашии» журналсенче тăтăшах пичетленеççĕ. Пултарулăх лаççинче чылай çул ĕçленĕскерĕн аса илмелли пайтах. Г.Айхи, Г.Волков, П.Железнов, А.Аттил пирки хитре статьясем пичетлесе кăларчĕ. Вĕсемпе хăй вăхăтĕнче Петр Егорович çыру çӳретнĕ.

– Сăвăсен халь çырмастăп. Начар çырас килмест, лайăххи пуçа килмест. Чуна темĕн ыраттараканни кирлĕ, вăл вара çук, – терĕ сăвăç.

Кĕнеке кăларма малтан çăмăл пулманни пирки те сăмах хускатрĕ Петĕр Эйзин. Чи малтан ăна Писательсен союзĕ пăхса тухнă. Икĕ рецензи, секци сĕнĕвĕ кирлĕ пулнă. Издательствăра темиçе алă витĕр тухнă.

## «Савни юррисем» – мăшăрне халалласа

Петр Егорович сĕтел çине хитре сăн ӳкерчĕк кăларса хучĕ. «Ку манăн чăн-чăн юрату», – терĕ хăюсăррăн та вăтанчăклăн. Малтанхи савнийĕ те унăн такам мар, хальхи мăшăрĕ пулнă.

Мана килĕшекен ярăма поэт никама та мар, 44 çул туслă, килĕштерсе пурăнакан мăшăрне Калерия Васильевнăна халалланă. Хăй каланă тăрăх, юратнă çын хавхалантарнипе çырăннă çав сăвă йĕркисем.



• ПЕТĔР ЭЙЗИН МĂШĂРĔПЕ КАЛЕРИПЕ.

Александр Пушкинăн «Я вас любил» сăввине хирĕçлесерех те çырнă Эйзин. «Эпĕ пĕрре юратнă тăк – пăрахаймастăп. Пушкин пек мар», – терĕ ăшшăн кулса Петр Егорович.

«Савни юррисем» кĕнекен хуплашки те хăйне евĕрлĕ. Каç пулнă, уйăх тухнă. Юратнă хĕрĕ савнине кĕтет. Çав вăхăтрах йĕрет те вăл. Унăн куççулĕсем çĕр çине сирень чечекĕ пулса тăкăнаççĕ. Кĕнекене Зинаида Чернова художник илемлетнĕ.

Турă çырни пӳрт умне килет теççĕ. Авланиччен Калерипе пĕр çуртра ĕçленĕ Петр Егорович. Пĕрпĕрне пĕрре курсах килĕштернĕ те пĕрлешнĕ.

## Туслă çемье

Ывăл та, хĕр те, тата виçĕ мăнук пур Петр Егоровичăн. Ывăлĕ Саша И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра информатика кафедринче тăрăшать. Икĕ ывăл çитĕнтерет. Хĕрĕ Лена Чăваш кĕнеке издательствинче редакторта ĕçлет. Унăн хĕрĕ Надя Санкт-Петербургри культура институтĕнче лингвистика уйрăмĕнче вĕренет.

Килте лармасть Петр Егорович. Тăван ялне Энехмете тата мăшăрĕн ялне Илленушкăньне /Элĕк районĕ/ час-часах çӳрет. Пахча çимĕç, улма-çырла ӳстерет. Çуллахи кунсенче вăхăтне дачăра çемйипе пĕрле ирттерет. Халĕ унта вутă сарайĕ тума пуçланă. Калерия Васильевнăпа иккĕшĕ туслă, килĕштерсе пурăнаççĕ, мăнукĕсемпе йăпанаççĕ.

Пурнăç çинчен, поэзи вăрттăнлăхĕ çинчен вăрахчен калаçса лартăмăр. Ирĕклĕ сăвă хăйне евĕрлĕхне тишкертĕмĕр.

*«Çак çĕр çинче камсем телейлĕ тетĕр?*
*Суккăррисем çак çĕр çинче телейлĕ –*
*Вĕсем çак пурнăç мĕнлине курмаççĕ.*
*Эпир куратпăр та...*
*Куç хуралса килет.*

*Çак çĕр çинче камсем телейлĕ тетĕр?*
*Ухмаххисем çак çĕр çинче телейлĕ –*
*Вĕсем çак пурнăç мĕнлине пĕлмеççĕ.*
*Эпир пĕлетпĕр те...*
*Пуç çаврăнса каять»,* – çак сăвă йĕркисене вуласа сыв пуллашрĕ манпа юлашкинчен Петĕр Эйзин поэт.

**Елена АТАМАНОВА.**





САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тĕнчепе паллашма укçа кирлĕ

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Шкул пĕтернĕренпе 5, 10, 15, 20... çул иртсен те тантăшсемпе пĕрле иртternĕ вăхăт асран тухмасть. Йăлтах кăсăклă пулнă пирĕншĕн. Етĕрне районĕнчи Ирçе шкулĕнчи вĕрентекенсем ăçта кăна илсе çитермен-ши пире? Çуллахи каникулсенче метеорпа Атăл тăрăх çул çӳреве тухаттăмăр. Шкул столовăйĕнчен темĕн тĕрлĕ сĕткен парса яратчĕç. Чул хула облаçĕнче, Мари Республикинче çĕр каçаттăмăр. Хĕллехи каникулта Чĕмпĕрти истори вырăнĕсемпе паллашнă.**

**Класс ертӳçипе Зоя Никифоровăпа пĕрле Шупашкара театра, кинона тăтăш килеттĕмĕр. Çĕнĕ спектакльсемпе фильмсене пĕрле сӳтсе яваттăмăр. Çак вăхăт çаплипех куç умне тухать.**

**Çĕн йĕркелӳ тапхăрĕ пуçлансан пире, тĕслĕх класа, Мускава илсе кайрĕç. Хальхи пекех ас тăватăп, билетшăн 25 тенкĕ тӳленĕччĕ. Шкула вырнаçтарчĕç. Пĕр эрне хула курса çӳрерĕмĕр. Мавзолейре те, куравсенче те, зоопаркра та... пулнă. Çул çӳреве тухма май килнишĕн мĕнешкел савăннă. Ун чухне талон вăхăчĕ пуçланнăччĕ. Мускаври тăвансем пире сумки-сумкипе канфетпа кăлпасси тыттарса ячĕç. Çĕр-шывăн тĕп хулинче мороженăй çисе килентĕмĕр. Ачалăхри аса илӳ çав тери хаклă. Ăна нимĕнпе те улăштарас çук.**

**Çакнашкал çӳл çӳрев, паллах, пирĕн тавра курăма анлăлатнă, хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхтарнă. Туслаштарнă та.**

**Халĕ хамăрăн ачасене кăтартса çӳремелле те – шухăшлани пурнăçлансах пымасть. Çавăнпах ялан вăхăт çукки çине йăвантаратпăр. Телее, шкулти ашшĕ-амăшĕн комитечĕ тăрăшса ĕçлет. Çак йыш çине тăнипех пуçламăш класра вĕренекенсем пĕрре – музее, тепре курава кайса килеççĕ. Эпĕ, сăмахран, çакăншăн укçа тӳлеме хирĕç мар. Ачасем курни-илтни çинчен темччен калаçаççĕ.**

**Анчах кăçалхи çулла ашшĕ-амăшĕн комитечĕн канма та вăхăт пулман. Вĕсене, ачасен кăмăлне тупма тĕллев тытнăскерсене, йĕрке хуралçисемпе прокурорсем чĕнсе илнĕ. Пĕр амăшĕ çăхав çырнинчен пуçланнă çак ĕç.**

**Ку çемье Шупашкара куçса килнĕ. Вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе тĕпренчĕкне экскурсие илсе çӳреме, уявсенче парнепе хавхалантарма ашшĕ-амăшĕн комитечĕ унран укçа ыйтнă. Хĕрарăм каярах пама шантарнă. Çакна вăхăтра ĕçе вырнаçайманнипе сăлтавланă. Паллах, ĕненнĕ ăна. Хайхи çав тĕпренчĕке нихăш мероприятирен те хăварман. Тĕслĕхрен, спорт ăмăртăвĕсем хыççăн ачан хырăмĕ выçать. Класс бюджетĕнчи укçа-тенкĕпе кукăль-çăмах, вĕри чей илмех тивет.**

**Вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнчех ашшĕ-амăшĕн комитечĕ хаваслă стартсем йĕркелерĕ. Шкул стадионĕнчи тĕл пулу, паллах, пурне те çывăхлатрĕ. Ашшĕ-амăшĕн пĕр-пĕрипе паллашма май килни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Мала тухнисене парнепе савăнтарас килет. Ача-пăчашăн, чăнах, нимĕн те шел мар.**

**Унтан класпах похода кайрăмăр. Ĕçмелли-çимелли туянтăмăр, шашлăк пĕçертĕмĕр.**

**1-мĕш класс вĕренекенĕсем куравсенче пулчĕç, спектакльсем курчĕç, музейри экспонатсемпе паллашрĕç. Унсăр пуçне шывшăн тӳлемелле, стакансем туянмалла, шкап таврашĕ илмелле...**

**Çуралнă кунра кирек кам та асăнмалăх парне кĕтет. Çапла майпа класс бюджечĕ пĕчĕкленсех пычĕ. Шутласа пăхрăмăр та – кашни ачашăн 3000 тенкĕ тăкакланă.**

**Вĕренӳ çулĕ вĕçленсен тин ачишĕн малтан тӳлемен амăшĕнчен комитет членĕсем укçа ыйтнă. 1 пин тенкĕ кăларса панă вăл. Урăх тӳлеме килĕшмен.**

**"Манăн ачана кĕнеке те, канфет та, ытти ăпăр-тапăр та илсе памалла пулман", – канашлăва пуçтарăнсан татса каларĕ хĕрарăм. Унран та ытла, мероприятисене хутшăннăшăн та ӳкĕнме пуçларĕ. Килте ларсанах укçа тăкакланмасть имĕш.**

**Амăшĕ нумай шухăшласа тăман – прокуратурăна, Шалти ĕçсен министерствине çăхав çырнă. Унран ирĕксĕрлесе укçа ыйтаççĕ-мĕн... Пурне те ура çине тăратнă çак пăтăрмах. Анчах ашшĕ-амăшĕн комитечĕ никама та усал сунман, саккун пăсман, çавăнпах уголовлă ĕç пуçарман, штраф тӳлеттермен. Пыл пичкине 1 кашăк тикĕт янă пекех пулчĕ ку пулăм.**

**Нухратсăр, чăнах, пĕр утăм та тăваймăн. Кăçал та класс бюджетне пысăклатмалла. Хальхинче çĕнĕ йĕркепе килĕшӳ тусах укçа пуçтарма пуçларăмăр.**

СПОРТ

# «Нацисен кросĕ» йыхравларĕ

Раççейре, çавăн пекех Чăваш Енре те, "Нацисен кросне" 2004 çултанпа йĕркелеççĕ. 2009 çултанпа ăна республикăри мĕн пур хулапа районта ирттерме тытăннă. Иртнĕ вырсарни кун та хĕвеллĕ ăшă çанталăк хастар халăха çăмăл атлетикăри тĕнчери чи пысăк старта йыхравларĕ. Ăмăртăва 59 пин ытла ентеш хутшăнчĕ.

Çак старт кĕркуннехи хăйне евĕр уяв пулса тăма ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. Ахальтен мар унта хутшăнакансен йышĕ çулсерен ӳсет. Аслă ӳсĕмрисем те старта тухрĕç. Акă, сăмахран, кăçал чи аслисем – 84-ри Миранда Кольцовăпа 81-ти Леонид Никифоров.

– 16 çултанпа спортпа туслă эпĕ. Пĕрре те ахаль лармастăп. Республикăри мĕн пур спорт мероприятине хутшăнма тăрăшатăп. "Йĕлтĕр йĕрне" те кăмăллатăп. Спорт вăл – сывлăх, илем, вăрăм кун-çул вăрттăнлăхĕ, – тет Миранда Васильевна.

Ăш пиллĕскер пурне те сывă пурнăç йĕркине тытса пыма чĕнсе калать. Ĕмĕрĕпе Шупашкарти Коопераци институтĕнче физкультура занятийĕсене ирттернĕскер халĕ унта ветерансен канашне ертсе пырать. Ун патне 69 ватă пухăнать. Вĕсене вăл ахаль лартмасть – спортпа йăпатать.

– Больницăра нихăçан та выртман, чирлемен. Çак çула çитсе юн пусăмĕ аптăратнине те ас тумастăп. Пурнăçпа туллин киленетĕп, – тет Миранда Кольцова ытларах çуран çӳреме чĕнсе.

Чупакансенчен чи кĕçĕнни вара – Васильева Анна. Çулталăк та пĕр уйăхри хĕр пĕрчи çак кун старта мĕншĕн тухни те паллă: Васильевсен çемйи спортпа туслă. Олег та, мăшăрĕ Оля та çулла – чупаççĕ, хĕлле йĕлтĕр сырса ярăнаççĕ, бассейна час-часах çӳреççĕ. Сывлăхлă пулассишĕн ăнтăлакансем хĕрĕсене те хăйсенчен хăвармаççĕ. Ахальтен мар вĕсем "Спортпа туслă çемье" ята тивĕçрĕç.

– Ачасем сывă пулччăр тесен вĕсене пĕчĕкренех спортпа туслаштармалла, – тет Чăваш патшалăх академии драма театрĕнче сцена машинистĕнче тăрăшакан кил хуçи.

Спорта кăмăллакан Васильевсем – ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче. Красноармейски каччипе Çĕрпӳ хĕрĕ ачисене чăвашла вĕрентеççĕ. 5-ри Ульяна акă вырăсла та, чăвашла та калаçать. Мана, тăван чĕлхе шăпишĕн кулянакана, çакă питĕ савăнтарчĕ. Ара, халĕ хулара чăвашла калаçакан ача сахал.

Республикăри тĕп старта Шупашкарти кӳлмек хĕрринче пачĕç. 16 пин ытла çын хутшăнчĕ унта. Çĕнĕ Шупашкарпа Канаш хулисенче, Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче пурăнакансем те хастарлăхпа палăрчĕç çак кун.

Спорт уявне ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене спортпа туслă пурăннишĕн тав турĕ, малашне те хастар пулма чĕнчĕ. "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум çывхарни пирки аса илтерчĕ. Михаил Васильевич Правительство членĕсемпе, депутатсемпе, организаци-предприяти ĕçченĕсемпе тепĕр çул Шупашкарта иртекен Европа чемпионатне халалласа 2015 метр чупрĕ. Тĕрлĕ ӳсĕмрисем 1–12 километр дистанцире тупăшрĕç.

Ăмăрту тĕп судйи пулма кăçал РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерне, Олимп вăййисен бронза призерне Татьяна Архиповăна шаннă.

Нацисен кросне ирттересси, пурте пĕрле старта тухасси йăлана кĕчĕ, уява çаврăнчĕ терĕмĕр. Шел, ун пирки хальлĕхе пурте пĕлмеççĕ иккен-ха. Кӳлмек хĕррине кайнă май троллейбусра юнашар пыракан хĕрарăм халăх йышлă пухăннине курсан: "Мĕнле уяв ара паян?" – кăсăкланчĕ. Чупу çинчен пĕлтерсен ун пирки нимĕн те илтменнине систерчĕ. "Пĕлтерӳ вара нихăçта та çук. Юри сăнарăм – курмарăм", – хутшăнчĕ пирĕн калаçăва кондуктор та.

Малашне кросс пирки пĕлмен-илтмен çын юлмасса шанас килет. Ун чухне хутшăнакансен йышĕ тата та пысăкланĕ!

**Татьяна НАУМОВА.**

# АКЦИ: юпа уйăхĕн 4-мĕшĕччен йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | ВД800 | 703,86 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар | В8353 | 286,08 | 150 | 141 | 90 |
| Самраксен хаçачĕ | ВД804 | 329,28 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 296,88 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 188,82 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 167,88 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси. Голос крестьянина | В4838 | 353,82 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси. Кил | В3887 | 167,88 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 279,48 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 163,44 | 150 | 126 | 108 |
| Литература искусство культура. ЛИК | В3429 | 120,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 269,28 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 629,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 256,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 157,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте. Игрушка | В3771 | 125,52 | 114 | 111 | 90 |

КИЛ ĂШШИ

# «Ача çуртĕнче юлмастăп, атте-анне патне каятăп»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Тепри, хĕр ача, шапăлти пулнипе кăмăла кайрĕ. Сăвă та пĕлет, тухса калаçма та вăтанмасть вăл.

Сергейпе Надьăна илсе таврăнтăмăр. Пурнăç йĕркеленсе кайрĕ. Анчах тепĕр уйăхранах Ача çурчĕн ĕçченĕсем шăнкăравларĕç. Вĕсем каланă тăрăх – Надьăн аппăшне усрава илнĕ çынсем Швецирен Раççее килесшĕн. Ку хутĕнче Надьăна та пĕрле илсе каясшăн. Чун хурланчĕ. Лару-тăру çакнашкал çаврăнса тухнăшăн пайтах макăрнă. Ют çĕр-шыва куçиччене çакăнта пурăнчĕ вăл", – калаçăва тăсать кил вучахне упракан хĕрарăм. Пур пĕрех Надя çинчен манмаççĕ Андреевсем. Интернет урлă та пулин унпа çыхăну йĕркелесшĕн.

## Совет фильмĕнчи Степка майлăскер

Çакăн хыççăн Владимир Валентиновичпа Надежда Владимировна тепĕр ача илме шухăш тытнă. Хĕр пĕрчи шыранă вĕсем, анчах ниçта та тупайман. Юлашкинчен каллех Шупашкарти Ача çуртне çитнĕ. "Пĕр ачана кĕртсе тăратрĕç. Калпакĕ чалăшнă, кĕрĕк тӳмисене вĕçертсе янă. Хăй тĕттĕм ӳтлĕ. "Мужики" совет фильмĕнчи Степкăна аса илтерчĕ вăл", – çак самантa куç умне кăларма пулăшать хĕрарăм. Саша, чăнах, каснăларнă Степка.

"Эпир килсе кĕнĕ чухне Сергей апат çисе ларатчĕ. "Акă Сорокин та çитрĕ", – терĕ вăл ун çине пăхса. Иккĕшĕ тӳрех пĕр чĕлхе тупрĕç", – ăнлантарать Надежда Владимировна.

Сашăн амăшĕ чирлесе çамрăклах çĕре кĕнĕ. Пĕртен-пĕр çывăх тăванĕ – кукамăшĕн амăшĕ – пĕчĕк ачана пăхайман. Ватă хĕрарăм Сашăпа та, Андреевсемпе те çыхăну тытать. Пĕрре вăл пурне те Шупашкара чĕнсе илнĕ. "Саша килчĕ!" – подъезд умне тухсах кĕтсе илчĕç пире хула çыннисем", – хушса калать Владимир Валентинович. Ун чухне амăшĕн хваттерне Саша çине куçарнă.

## Амăшĕпе пĕр ятлăскер

Андреевсем çаплипех хĕр ача илес килнине пытарман. Кăштахранах Шупашкарти Ача çуртĕнче ĕçлекенсем вĕсене пурне те цирка чĕнсе илнĕ. Çакăнтах Андреевсене виççĕри Надьăна кăтартма палăртнă. Хĕр пĕрчин чунĕ сиснĕ пулинех – чупса пырса Надежда Владимировнăна ыталаса илнĕ вăл. "Ку – манăн анне", – ыттисене ĕнентерме хăтланнă пĕчĕкскер. Ăна Ача çуртĕнче епле хăварăн?

"Çине тăрса пӳрте пысăклатрăмăр. Икĕ уйăх хушшинче шалти-тулти ĕçсене вĕçлерĕмĕр", – çирĕплетеççĕ Андреевсем.

Вăхăт иртнĕçемĕн Надя хăйне юлташ хĕр ача ыйтма пуçланă. Татах районти опека пайне çул тытнă мăшăр. Ку хутĕнче Çĕмĕрлери Ача çуртне янă вĕсене.

## Йĕрекен хĕр ача

"Кунта пĕр чарăнмасăр 3 кун макăракан хĕр ача пур. Вăл урăх çемьере пурăнчĕ. Вăрланăшăн, улталанăшăн çулталăкран каялла леçсе пачĕç ăна. Çавнашкал ачана илме сĕнместпĕр", – кĕтсе илнĕ Андреевсене воспитательсем.

Женьăна çав тери шелленĕ вĕсем. Темле ӳкĕтлесен те хăйсен шухăшне улăштарман.

Хĕр ача çул тăршшĕпех йĕнĕ. Яла çитсен машинăран та тухасшăн пулман. "Эсир мана пур пĕрех каялла тавăрса парăр. Халех Ача çуртне илсе кайăр. Мана пурте ятлаççĕ. Эпĕ никама та кирлĕ мар..." – куççульне шăлнă Женя.

Пӳрте кĕрсен Надя çийĕнчех унăн кăмăлне çавăрма пултарнă. Эрнеренех Çĕмĕрлери Ача çуртне кайма сăлтав тупăннă вĕсен. "Эпĕ кунта юлмастăп, аттепе анне патне каятăп", – çирĕппĕн каласа хăварнă хĕр ача. Ăна 1-мĕш класа каймашкăн хатĕрлеме пуçланă.

"Женя суйма, чееленме, çын япалине тытма пултарнине ĕненместĕп. Ахалех тикĕтпе вараланă ăна", – тет амăшĕ.

Çав вăхăтрах мăшăра тин çуралнă хĕр ачана та сĕнсе пăхнă. Вăл Андреева хушаматлă пулнă теççĕ. Анчах Владимир Валентиновичпа Надежда Владимировна Женьăнах суйласа илнĕ. Ăна юрату тĕнчине çавăтса кĕртме тĕв тунă. Шăпи урăхла çаврăнса килнĕ пулсассăн, ахăртнех, çынсене ĕненме пăрахĕччĕ вăл.

"Хальхи ăспа пулсан икĕ хĕр ачана та илĕттĕмĕр", – теççĕ Андреевсем.

## Суворов училищинче вĕреннĕ

5-мĕш класс хыççăн Саша Хусанти Суворов училищине вĕренме кĕнĕ. Çулталăк çурăран каялла киле таврăнма шухăш тытнă вăл. Амăшĕ опека пайĕн ĕçченĕсемпе пĕрле Хусана тухса кайнă. Сашăна малалла вĕренмешкĕн ӳкĕте кĕртме психологсенчен пулăшу ыйтнă хĕрарăм. "Кунта йывăр тата çемьепе пĕрле пурăнас килет", – пытарман ача. Çитменнине, унăн çывăх юлташĕ училищерен пăрахса кайнă. Паллах, унăн кăмăлне шута илнĕ Хусана вĕçтерсе çитнисем.

Саша пур пĕрех çар çынни пуласшăн. 9-мĕш класс хыççăн каллех Суворов училищине кайса пăхасшăн вăл.

## Каланине итлемен

Çак кун опека пайĕн ĕçченĕсене хурлăхлă хыпар пĕлтернĕ: Никитинсен амăшĕ чире çĕнтереймесĕр вилсе кайнă. Виçĕ тĕпренчĕкĕ тăлăха юлнă. Андреевсем нумай шухăшласа тăман: ачасене хăйсен хӳттине илме палăртнă. Васкасах документсем пуçтарма пуçланă.

"Никитинсене сире памаççĕ, вĕсене тăванĕсемех пăхса çитĕнтересшĕн", – пĕр шăнкăрав Владимир Валентиновичпа Надежда Владимировнăн ĕмĕтне татнă. Ку хыпарпа та çырлахнă мăшăр. Çапах та Камилăна, Юрăна, Аринăна тăванĕсене пама юраман сăлтав тупăннă. Çавна май опека пайĕн ĕçченĕсем каллех Андреевсемпе çыхăннă.

Виçĕ пĕр тăванран пĕри – Камила – алăран вĕçерĕнни пирки малтанах систернĕ. 13-ри хĕр ача туртнă, ĕçнĕ, усал сăмахсемпе перкелешнĕ. Тата... каланине итлемен, ыттисене хисеплемен. Пиллĕкри Юрийпе, çулталăкри Аринăпа пĕрле аппăшне те Андреевсем Янтуша илсе килнĕ. Анчах Камила çакна хаклама пĕлмен: хăйĕнчен кĕçĕннисене хĕненĕ, усал тĕслĕх кăтартнă. Ун чухне килти вăрçăхарçă никама та канăç паман. Камила хытă çапнăран Сергейăн пуç мимийĕ чĕтреннĕ. Çакăн хыççăн çĕнĕ ашшĕ-амăшĕн ăна Пăрачкаври Ача çуртне леçсе пама тивнĕ.

"Ытла вăр-вар пирĕн Юра. Таçта та çитет. Çакăншăнах класс ертӳçи пĕрмай асăрхаттарать ăна. Эпĕ шкулта хăйне мĕнле тытмалли пирки куллеnex калаçатăп унпа", – ывăлĕ çине ăшă куçпа пăхать амăшĕ.

## Вырăн айĕнчи пылак çимĕç

Ача пылак юратать. Андреевсем канфет-печенирен татăк пурăнмаççĕ. "Эпĕ вырăн пуçтарнă чухне матрас çавăрса хуратăп. Малтан, Ача çуртĕнчен килсенех, ывăл-хĕр вырăн айне пылак çимĕç пытаратчĕ", – аса илет кил хуçи арăмĕ. Кайран лекмесрен шикленнĕ ĕнтĕ пĕчĕкскерсем.

"Канма ларсан хĕр ачасем чĕрçи çине ларма юратаççĕ. Арина пурне те çĕнтерет. Çума килсе тăрать те макăрнă пек тăвать. Аслисен тăрса кайма тивет", – палăртать çемье пуçĕ. Кĕçĕнни, чăнах, ашшĕнчен шит те юласшăн мар.

## 6 хут пуян

8-мĕш класра вĕренекен Сергей мунча хутса янăччĕ. Эх, милĕкпе çапăнма юратаççĕ вĕсем. 9-мĕш класра пĕлӳ илекен Саша ĕне сума хăнăхнă. Стройка ĕçĕпе кăсăкланать. "Йывăр йăтнине курсан чупса пырать те çĕклеме ярса илет", – тет ун пирки амăшĕ. 8-мĕш класа çӳрекен Надя ал ĕçĕпе аппаланать. Урайне çавраka кавир çыхса хунă вăл. 4-мĕш класра ăс пухакан Евгения ташша ăста. Çак эрнере хĕр ача Мускава тухса кайрĕ. Хăйĕн пултарулăхне Раççей шайĕнчи ăмăртура кăтартĕ Женя.

"Ачасене киле илсе киличчен 15 литр кĕрекен кастрюль те хатĕрлесе хунăччĕ. Унпа сайра хутра – пахча çимĕç маринадланă е салат хупнă чухне – усă куратпăр. Мультиваркăра хатĕрленĕ апат та иккĕ ларса çиме çитет", – тет Надежда Владимировна.

Йышлă çемьере темле пăтăрмах та сиксе тухнă. Пĕчĕкскерсем хур чĕпписене пăвса пăрахнă, банкăсене çĕмĕрсе пĕтернĕ, пылчăкпа варaланнă... Юрать-ха, тĕпренчĕксем хăйсем шар курман. Çак тĕслĕхсем те лайăххипе япăххине уйăрма вĕрентнĕ вĕсене.

Аслисем кĕçĕннисене тĕслĕх кăтартса пыраççĕ, вĕренӳре пулăшаççĕ, кил таврашĕнче ĕç майне кăтартаççĕ. Çак ачасен кулли кирек камăн чунне ăшăтĕ. Пирĕн пурнăçра кил ăшшинчен хакли нимĕн те çук.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.



• ИКĔ НАДЯ: АМĂШĔПЕ ХĔРĔ.



• АРИНА АШШĔНЧЕН ПĔР ШИТ ТЕ ЮЛМАСТЬ.

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ: 70 ÇУЛ

# Çилпе вĕçнĕ çамрăклăх


Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи кĕрлесе иртнĕ кунсем пиртен аякка та аякка юлаççĕ. Вăрçă ветеранĕсен йышĕ те çулсерен сахаллансах пырать. Пурăнаканни те паян куçĕ япăх курнипе, хăлхи илтменнипе, аллиури илтеменнипе асапланать. Вăр-варлăхне çухатмансем питех те сайра. Çавăнпах чылайăшĕ ачисен, тăванĕсен хӳттинче пурăнать.

Акă Çĕрпӳ районĕнчи Янтушри Анастасия Егорова та халĕ хĕрĕпе кун кунлать. Амăшĕ йывăр чирлесен Антонина ывăлĕпе яла куçса килнĕ. Унтанпа 20 çул та çитнĕ ĕнтĕ.

Сăмах май, çак кунсенче пилĕк ача амăшĕ 92 çул тултарать. Ку тапхăрта мĕн кăна курса-чăтса ирттермен-ши? Колхоз тунă вăхăтра вĕсене килсĕр хăварнă, çуртне хуçалăх пурлăхне куçарнă. Кулак ачисем тесе айăпланă. Ялта пĕчĕк лавкка тытакан арçыннăн ачисен аллинчен юлашки çăкăр татăкне туртса илнĕ. Çемье арканнă: ашшĕ-амăшĕпе аслă ачисене Çĕпĕре ăсатнă, Анастасия Григорьевнăпа шăллĕне яла хăварнă. Хăйсем çинчи тумтирпе тăрса юлнăскерсем пĕр кӳршĕрен теприн патне çӳренĕ. Пĕрер çĕр касăнă та – урăх хӳтлĕх шырама тивнĕ. Кăштахран ачасене хăйсем патне илекен тупăннă. Трофим Степановпа мăшăрĕ йышăннă вĕсене.

7 класс пĕтернĕ Настук ăслă-тăнлă пулнине курнăсиснĕ арçын ăна малалла вĕренме ярас кăмăллă пулнă. Анчах арăмĕ Мироппи аппа хирĕçленĕ имĕш. «Эпĕ ăна хамăр пата вĕренме илмен», – кăмăлсăрланнă вăл.

– Пуян тесе ахалех пăлхатрĕç пире. Ача-пăчаллă çынна килсĕр хăварчĕç. Питĕ кулянатăп куншăн. Халĕ ун пек мар чаплă пурăнаççĕ. Никама та нимĕн те тумаççĕ, – телейсĕр ачалăхĕшĕн халĕ те вĕчĕрхенет ветеран.

«Пĕрмай ĕçлеттеретчĕ. Ирех тăратса чуста çăртаратчĕ», – каласа кăтартатчĕ анне», – тет Антонина Николаевна.

Вăрçă пуçлансан Анастасия Григорьевна фронта тухса каять. Мускав çывăхĕнчи вăрмансенче «хуçаланнă» вĕсен отрячĕсем. Зенитчица-ракетчица пулнă чăваш хĕрĕ. Хăйĕн тивĕçне – нимĕç самолечĕсене хула çывăхне ямалла пулман – тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшнă. Унсăр пуçне разведкăна çӳренĕ. Унта, паллах, пурне те яман. Вырăсла лайăххах пĕлекенсене, ытлашши калаçманнисене шаннă ку ĕçе. Çапла вăл çĕрлехи вăрман витĕр хăранине пăхмасăр пĕр чаçрен теприне кирлĕ хутсене сахал мар илсе çитернĕ. 1945 çулта Яппун вăрçине те çитнĕ чăваш хĕрĕ.

Вăрçăран таврăнсан Анастасия Григорьевна хăйĕн ентешĕпе – Николай Егоровичпа – пĕрлешнĕ. Кил хуçи те салтак атти тăханнă, фронтри чи хаяр çапăçусенче пулнă. Виççĕмĕш хутчен амансан – пуля ури витĕр тухнă – килне янă. Шел, вăл тăванĕсенчен 1989 çултах уйрăлса кайнă.

– Çамрăк ĕмĕр çилпе вĕçсе кайрĕ, – тет тăварлă куççульпе тулнă куçне пытараймасăр кинемей. Вăрçă ветеранĕ хăйсене амăшĕнчен уйăрса килсĕр хăварнине халĕ те каçараймать пулмалла. Вилĕме куçран пăхнă хăрушлăхран ытла телейсĕр ачалăхне аса илсе кулянать.

Жуков орденĕ, II степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕ, «1941–1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» медаль, «Японие çĕнтернĕшĕн» медаль, тĕрлĕ çулти юбилей медалĕ – пурне те тивĕçнĕ Анастасия Егорова. Паллах, пĕри те çăмăллăн лекмен. Ӳсекен ăру çак орден-медаль хакне чухламасть çав. Çавăнпах ăна тирпейлĕн упрама та ăнтăлмасть-тăр.

Шел, асăннă награндăсене пĕрне те куçпа кураймарăм. Орден-медальсен удостоверенийĕсем çеç тăрса юлнă. Мăнукĕ Павел вĕсене пĕтĕмпех сутса янă. Нумай тупăш илнĕ-ши? Ас тăвăм пахарах мар-ши? Халĕ хăй кукамăшне панă хваттерте пурăннине шута илсен çамрăкăн ватта пушшех хисеплемелле, упрамалла, унăн ас тăвăмне хакламалла пек туйăнать те... Çук çав... Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле тесе ахаль каламан.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

МАТТУРСЕМ!

# Эх, пахчи, Кăнар пахчи...

Çĕрпӳ тăрăхĕнчи Кăнарсем пĕри тепринчен хитререх те илемлĕрех пурăнма тăрăшнине хамăр курса ĕнентĕмĕр. Кашни килтех вун-вун тĕрлĕ кĕл чечек ӳстереççĕ. Куçа йăмăхтаракан хĕп-хĕрлĕ тĕмсем хăйсем патне катаранах кăчăк туртаççĕ.

Ивановсемпе Михайловсен тĕлĕнчен вара никам та чарăнмасăр иртсе каяймĕ. Кĕрен, шурă, шупка хĕрлĕ кĕл чечексем хитрелĕхĕпе тыткăнланисĕр пуçне таврана ырă шăршă сараççĕ. Кил умĕнчех темиçе тĕрлĕ исĕм çырли çӳлелле кармашни вара кирек кам куçне те тăрănатех. Ятарласа туяннăункă çийĕн явăннă вăл: урамран кĕрекен пĕчĕк алăк умĕнчен тытăнса крыльца патне çитиех. Çăтмах тĕнчи тейĕн, пӳртрен урама кĕнĕ-тухнă чухне емешĕл исĕм çырли айĕпе утса çӳреççĕ. Çупкăм-çупкăм çырлине, хурине, симĕссине, эпир те тутанса куртăмăр. Кăнар исĕмĕ кăнтăртан кӳрсе килнинчен тутлăрах пек те туйăнчĕ пире. Тахçан яла килнĕ узбек-таджиксем те вĕсен умĕнчен лăпкăн иртсе каяйман. «Кур-ха, кур, кунта исĕм çырли те çитĕнет. Паллах, пирĕн патринчен вĕтĕрех, çапах та ӳсет», – карта урлă кармашсах сăнанă хайхисем.

Икĕ кума, икĕ тăхлачă – Валентина Васильевна Михайловăпа Маргарита Вениаминовна Иванова – пĕр-пĕринпе ăмăртсах пахча илемлетеççĕ тейĕн. Кĕл чечекĕсене лавккаран, почтăран туянса лартнă. «Пăхмашкăн çăмăлах мар, ку чечек хăйне майлăрах çав. Шăши те ав тапăнса тарăхтарать, тымарĕсене кăшлать. Кăçал иртĕхсех кайнă, кĕл чечек айĕнче йăва çавăрнă. Тутлă-ши питĕ, тупнă çимелли! Сăтăрçăсенчен им-çам сапрăмăр-ха», – пăшăрханарах калаçрĕ Валентина Васильевна. Вĕсем ĕмĕрĕпех Кăнарта вырнаçнă нефть уçлакан станцире ĕçленĕ. Икĕ çемьене пĕр çуртра хваттер панă: çур пайĕ Михайловсен, тепĕр çурри – Ивановсен. Кӳршĕсем 21 çул хушши пĕр-пĕринпе туслă, килĕштерсе пурăнаççĕ. Малтан кумаллă, каярах, ачисем çитĕнсен, тăхлачăллă та пулса тăнă. Ивановсен аслă ывăлĕ Юра хĕр шыраса аякка каяс темен, кӳршĕ хĕрĕпе Наташăпа туслашнă, кайран туй кĕрлеттернĕ.


ВАЛЕНТИНА МИХАЙЛОВĂПА МАРГАРИТА ИВАНОВА.

Валентина Васильевнăпа Маргарита Вениаминовна пахчари ĕçсене тахçанах вĕçленĕ май çак илемлĕ кĕр кунĕсенче пĕрре те килте лармаççĕ, вăрмана мăйăра, кăмпана çӳреççĕ. Мăйăрне мăнукĕсем валли нумай татнă, хĕлле çиме пир хутаçа чиксех хунă. Кăмпине вара тăварланă, типĕтнĕ, шăнтнă та.

Тепĕр касра пурăнакан Зинаида Моисеева пахчинче те юмахринчен кая мар. Кил умĕнчи çул икĕ айккипе – ретĕн-ретĕн вунвун тĕрлĕ кĕл чечек. Зинаида Васильевнăна хĕрĕ Мускавран тĕрлĕ йышши чечек вăрлăхĕ ярса парать. Георгинсем те ахальлисем мар унăн, чи-чи шултрисем, пĕчĕк ача пуçĕпе танлашаканнисем. Зинаида Васильевна ĕмĕр-ĕмĕр шкул çулне çитменнисен воспитателĕнче тăрăшнă. Халĕ тивĕçлĕ канура. Алă усса ларма хăнăхман çав вăл. Тирпей-илеме, кил-çуртра хăтлă пулнине юратать.

Нина Маркова та яла илем кӳресшĕн тăрăшать. Вĕсем хысна çурчĕн çӳлти хутне туяннă. Кирпĕчрен купаланă пысăк çурт тавра малтан çум курăк чашкăрса ӳснĕ пулсан, халь çĕр-çĕр тĕрлĕ чечек ешерет.

– Пушă вăхăт нумай манăн. Кунĕпех урамра мăнуксемпе уçăлса çӳретĕп. Калча туса чечексем ӳстеретĕп. Çуркунне çанталăк пăртак ăшăтсанах урама лартма тытăнатăп. Ял халăхĕшĕн те, хамăршăн та кăмăллă, – тет Нина Александровна.

Кăнарта кашни кил хитре чечексемпе, улма-çырлапа пуян. Юратса, ăшă кăмăлпа ӳстерни куç кĕрет. Пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ тейĕн. Пан улми, груша, слива-чие, исĕм çырли ăнса пулнă вĕсен. Ку енчи халăх ĕçре ӳркенменни, çĕр ĕçне чунтан парăнни сисĕнет. Ăш пиллĕ те тараватă, пĕрмай лайăххи патне ăнтăлакан çынсен пурнăçĕ ялана тулăх та хитре.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.


ЗИНАИДА МОИСЕЕВА.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА авăн, 29-юпа,5

## 29 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.45 Т/с «С ЧЕГО НАЧИНАЕТСЯ РОДИНА» 16+
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
1.55, 3.05 Х/ф «ПОСЛЕДСТВИЯ ЛЮБВИ» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Землетрясение. Кто следующий?» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
22.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР. ЛЮБОВЬ ВОПРЕКИ» 12+
0.40 Х/ф «НАДЕЖДА» 16+
2.40 Т/с «ТАСС УПОЛНОМОЧЕН ЗАЯВИТЬ...»
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.45-18.05 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «СМЕРТЬ СЕСИЛЬ»
12.00 Д/ф «Автопортрет в красной феске. Роберт Фальк»
12.45 «Последний автограф» Избранные главы
13.10, 23.35 Х/ф «ЧУЖИЕ ПИСЬМА»
14.45, 2.40 «Мировые сокровища культуры»
15.10 Спектакль «РЕВИЗОР» Постановка В. Плучека
18.05 Д/ф «Анатолий Папанов»
18.50 Д/ф «Эрнест Резерфорд»
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Спокойной ночи, малыши!»
20.50 «75 лет Валентину Курбатову. «Эпизоды»
21.35 «Тем временем»
22.20 Д/с «История мира»
1.00 Д/с «Ищу учителя». «Гадкие утята» Сергея Семенова»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «До суда» 16+
9.05, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.30, 14.30, 17.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.55 «Прокурорская проверка» 16+
16.30 Х/ф «ЛУЧШИЕ ВРАГИ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00, 23.00 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.00 «Анатомия дня»
0.55 «Герои «Ментовских войн-8» 16+
1.45 «ДНК» 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.00 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
4.55 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10 Х/ф «ПЯТЬДЕСЯТ НА ПЯТЬДЕСЯТ»
9.55 Х/ф «ОТРЯД ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 «Постскриптум» 16+
12.50 «В центре событий» 16+
13.55 «Простые сложности» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00, 17.50 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЖЕНИХ» 12+
21.45, 1.45 Петровка, 38 16+
22.30 «Деловая схватка» 16+
23.05 Без обмана. «Медовая ловушка» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 «Футбольный центр»
1.05 «Мозговой штурм. Механическое бессмертие» 12+
2.00 Х/ф «ПРЕДЛАГАЕМЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» «СВАДЬБА» 16+
4.00 Д/ф «Леонид Броневой. А вас я попрошу остаться» 12+
5.05 Х/ф «ТИГРЫ-ЛЮДОЕДЫ ИЗ СУМАТРЫ» 12+

### РЕН

5.00 «Территория заблуждений» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 22.20 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 «Странное дело»: «Чингисхан. Два века обмана» 16+
14.00 «Тотальная распродажа» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Свободное время» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «БАНДИТКИ» 12+
23.30 «Любовь 911» 16+
2.15 Х/ф «ЭТА ДУРАЦКАЯ ЛЮБОВЬ» 16+
4.30 «СЛЕДАКИ» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

18.30, 21.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
18.45 «Ылтăн çÿпçерен» /6+/
19.00 «Туслăх йывăçĕ» /12+/
19.30, 21.30 “Республика” информационная программа
19.45 “По существу” /12+/
20.00 “Такие же” /6+/
20.30 «Акилбупсер» /6+/
21.45 “По существу” /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун, ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун, эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 — Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 — Новости. (12)

### Чăваш радиовĕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода

* * *

7.10 Мамино право
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода

* * *

12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал

* * *

18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Актуальное интервью
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

## 30 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15, 4.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.45 Т/с «С ЧЕГО НАЧИНАЕТСЯ РОДИНА» 16+
14.25, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
1.50, 3.05 Х/ф «МУЖЕСТВО В БОЮ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 Т/ф «Агент А/21. Наш человек в гестапо» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
22.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР. ЛЮБОВЬ ВОПРЕКИ» 12+
23.50 К 85-летию со дня рождения. «Николай Рыжков. Последний Премьер Империи»
0.55 Х/ф «НАДЕЖДА» 16+
2.55 Т/с «ТАСС УПОЛНОМОЧЕН ЗАЯВИТЬ...»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Утренний гость /на чувашском языке/**
**9.25 Доступная среда**
**9.40-9.55 Туристический маршрут**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.45-18.05 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «СМЕРТЬ СЕСИЛЬ»
12.05 Д/ф «Здесь место свято. Соловки»
12.45 «Последний автограф» Избранные главы
13.10, 23.35 Х/ф «ДНЕВНИК ДИРЕКТОРА ШКОЛЫ»
14.30 Д/ф «Сергей Баневич. Современник своего детства»
15.10 Спектакль «ПРОСНИСЬ И ПОЙ!» Постановка М. Захарова
16.50 Д/ф «Георгий Менглет. Легкий талант»
17.35 Д/ф «Эпоха Дмитрия Лихачева, рассказанная им самим»
18.05 Звезды скрипичного искусства. Леонидас Кавакос
19.15 Главная роль
19.30 Искусственный отбор
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Спокойной ночи, малыши!»
Хам валли авланман е мăшăрсăр арçын тупаймастăп-и? Тепĕр тесен пĕччен те йĕркеллех пурăнса ирттерме пулать. Хулара утă çулмалла мар, выльăх тытмалла мар. Стена çине кӳршĕ те пăта çапса параять. Ахаль хутшăнусем пысăк юратăва куçиччен савнине сивĕтме шухăшларăм. Чавса çывăх та çыртма çук тенине асран кăлармастăп. Кайран уйрăлса пĕтме йывăр пулĕ.

**АЛЕНА.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Эпĕ 77 çулта. Челябинскра хăтлă хваттерте пурăнатăп. Ĕçместĕп, туртмастăп. Юрлама, шӳтлеме, çул çӳреме юрататăп. Чăваш хĕрарăмĕпе паллашасшăн. Пурăнмалли кĕтесе сутса Шупашкара куçма та хирĕç мар.**

**Телефон – редакцире.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Юрату вăййи

Эпĕ, пĕрремĕш курс студенчĕ, общежитие таврăнаттăм. Троллейбусра илемлĕ хĕр юнашар тăнине тӳрех асăрхарăм. Чиперлĕхне çеç-и, сăпайлă та тирпейлĕ пулни те пĕрре курсах сисĕнчĕ. Студентсен хулине çитсен вăл та чарăнура тухасса шаннăччĕ. Çук, пике вырăнтан та хускалмарĕ. Троллейбусрах паллашманнишĕн хама айăпларăм. Пысăк хулара ăна тепре тĕл пулас шанчăк пăчланчĕ. Вăхăтлăх...

Манăн ĕмĕт пĕр эрнерен çунатланса чĕрĕлчĕ. Пĕр ирхине хайхи чиперкке эпĕ вĕренекен аслă шкула çитиех ларса пычĕ. Эппин эпир тĕл пулатпăрах! Унтанпа темиçе те куртăм ăна. Анчах кашнинчех пырса сăмах хускатма хăяймарăм. Пĕррехинче пĕр курсра вĕренекен Сашăпа иккĕшĕ калаçнине асăрхарăм. Юлташăмран май тупса хĕр пирки ыйтса пĕлме тĕв турăм. Асăрханса çавăркаларăм калаçăва. Тен, Саша хăй куç хывнă ăна?

Ахалех пăлхантăм. Ентешсем юлташла çеç калаçаççĕ. Тепрехинче иккĕшне курсан тӳрех вĕсем патне çывхартăм. Çапла паллашрăмăр унпа. Тепрехинче тĕл пулсан Кĕтерук хăех сăмах чĕнчĕ: калаçрăмăр, телефон номерне те пачĕ. Уçăлма чĕнес шухăшпа пĕр-икĕ хутчен шăнкăравларăм ун патне. Анчах кашнинчех хирĕçлемелли сăлтав тупăнчĕ чун çунтармăшăн.

Черетлĕ хутчен шăнкăравласан Катя пытармарĕ: «Коля, ан çиллен те, каçхине урама чĕнес тĕллевпе ан шăнкăравла текех. Манăн савни пур», – терĕ. Кун пек хурав мана, паллах, савăнтармарĕ. Çапах та çилленмерĕм. Тӳрĕ кăмăллă пулнишĕн тата та ытларах хисеплерĕм.

Хĕр чух – хĕрĕх, яш чух – аллă теççĕ-и-ха? Кăштахран урăххипе паллашрăм та ăна юратрăм.

Иккĕмĕш курса çитсен каçхи кӳлĕм вĕренме тытăнчĕç вĕсем. Çавăнпах питех те сайра курнăçаттăмăр. Чуна пынă çын унтан йĕр хăвармасăр тухма пултараймасть-тăр. Ăна тĕл пулсан ăшăмра пур пĕр темĕн йăшăлт! тăватчĕ. Кашнинчех вăл илемленсе те чиперленсе пынăн туйăнатчĕ. Ара, хĕр тени пиçсех пырать çав.

Çапла виççĕмĕш çул вĕренеттĕмĕр шурă Шупашкарăмăрта. Эпĕ Ирăпах калаçаттăм. Кĕтерука хăçан курнине те маннăччĕ ĕнтĕ. Анчах пĕр каç пурнăçăма пач улăштарчĕ темелле. Шăпах çав кун савнипе урлĕ-пирлĕ пулнăччĕ. Ыйхă килменрен урама уçăлма тухса утрăм. Сивĕччĕ. Чун тулхăрнипе çеç çанталăк хаярлăхне туймастăп. «Ăçта каян, чĕкеç, каçа хирĕç» евитлет пĕр сасă çурăм хыçĕнче. Вăл темле палланăскер пек. Çаврăнса пăхатăп та – ман хыççăн Катенька утать. Тахçантанпа курманскерсен калаçмалли пурах. Ытти-хыттинчен ытла маншăн чи пĕлтерĕшли – хĕр савнийĕпе уйрăлни пулчĕ. Калаçа-калаçа ансăр сквера тухрăмăр. Çын çукпа пĕрех. Шăнса хытнă хĕре кăштах та пулин ăшăтас тесе хам çума пăчăртарăм – чармарĕ. Тулли кăкăрĕ чĕреме пусарчĕ тейĕн – сывлайми пултăм. Ачашлăхпа çепĕçлĕх чыхăнтарать тейĕн... Малтанхи туйăмсем епле ан вăранччăр-ха капла?

Манăн савни пирки пĕр сăмах та тĕпчемерĕ Катя. Тепĕр кун театрта тĕл пулма калаçса татăлтăмăр та уйрăлтăмăр. «Икĕ билет пур, пыма никам та килĕшмерĕ», – терĕ вăл. Эпĕ – хирĕçлемерĕм.

Эх, ытла та хитре-çке кинори юрату! Театрта та çаплах иккен. Те актерсен вăййи хавхалантарчĕ, те таса юрату хăпартлантарчĕ – çав каç эпĕ ăна пĕрремĕш хут чуп турăм. Хальхинче те турткаланмарĕ вăл. Эх, эпĕ те çав... Хăй вăхăтĕнче вăл мана каччи çинчен пĕлтернĕ пек: «Тем пек санпа çӳрĕттĕм – савни пур», – терĕм Ира пирки систерсе.

Çилленмерĕ вăл. Кĕвĕçмерĕ. Тепĕр хутчен чуп турĕ те манран шăнкăрав кĕтнине систерчĕ.

Мĕн çавăрчĕ пуçăма: Ирина патне каяс вырăнне Катьăпа тĕл пулаттăм. Метеорит хăвăртлăхĕпе аталанчĕ пирĕн юрату. Юмахри пек икĕ эрне... Эпĕ пуçа çухатасла юратнăччĕ çеç – Кĕтерук манăн пурнăçран пач çухалчĕ. Тĕл пулăва пымарĕ, шăнкăравласан трубкăна тытмарĕ. «Сывă пул», – пулчĕ кĕске çыру.

Нимĕн ăнланмасăр тăрса юлнăскер нумайччен пуçа ватрăм. Çĕрĕ-çĕрĕпĕ шухăшлаттăм ун пирки. Шырасан-шырасан унпа тĕл пулмалли меслет тупрăмах. Мĕн пулса иртнине ăнлантарма ыйтрăм.

– Эсир каччăсем çеç хĕре çапла пăрахма пултараççĕ тетĕр-им? Эпир те юрату вăййине çапла йĕркелеме пĕлетпĕр, – терĕ те пăрăнса утрĕ.

Каярах çеç пĕрле вĕренекен Сашăран Кĕтерука савнийĕ питех те кӳрентернине пĕлтĕм. Ăна тарăхнишĕн мана тавăрчĕ пулать.

Эпĕ вара халĕ те саватăп ăна...

**МИКУЛАЙ.**

АХ, АНЧАХ...

# «Мăшăрăм, каçар...»

Миçе хутчен çĕкленсе сехет çине пăхмарĕ ĕнтĕ Галя – мăшăрĕ çаплипех таврăнмарĕ-ха. Ун çине алă сулса тутлă ыйха çеç путас хĕрарăмăн. Çук вĕт. Упăшки килмесĕр ниепле те çывăрса каяймасть. Тĕрĕссипе, Саша çитсен те тӳрех куç хупасси пулмасть-ха – кăна арăм та аван чухлать. Ара, каллех ӳсĕр таврăнать ĕнтĕ. Унсăрăн халĕччен ăçта çӳремелле?

Саша килне вăхăтра таврăнми пулсан малтанах Галя çакна мăшăрĕ урăх хĕрарăмпа явăçнипе сăлтавларĕ. Кĕвĕçем пекки те турĕ. Саша вара кашнинчех хăй ĕçре тытăнса тăнине, арçынсемпе кăштах хаярріне сыпса калаçкаласа ларнине çеç пĕлтерчĕ. Малтанах упăшкин сăмахĕсене шанмарĕ хĕрарăм, каярах ĕненмех тиврĕ. Саша вăхăтра килмен чухне темиçе хутчен те ĕçе пыра-пыра кĕчĕ вăл. Кашнинчех пĕр ӳкерчĕк: пĕчĕк сĕтел тавра пилĕк-ултă арçын ларать, варринче – эрех кĕленчи. Хăйсем шапăлтата-шапăлтата картла выляççĕ. Çӳресен-çӳресен Гальăна та упăшкине сыхласа ывăнтарчĕ. Вăл ун çине алă сулчĕ. Çук, аплах мар. Мăшăрĕ ĕçкĕпе иртĕхни питех те пăшăрхантарать ăна. Мĕн чухлĕ йăлăнмасть пулĕ, мĕн кăна каласа вăрçмасть хĕрарăм упăшкине. Усси – çук. Саша урăлсан текех ĕçмессе шантарать пулин те сăмахне çилпе вĕçтерет çав.

Юлашки вăхăтра мухмăрлă çӳресси пушшех йăлана кĕчĕ темелле. Акă халĕ те Галя мăшăрĕшĕн пăшăрханнипех куçне хупаймасть. Юрать икĕ хĕрĕ качча тухнă та хăйсен çемйисемпе пурăнаççĕ. Амăшĕ ашшĕне кĕте-кĕте куçне хупманнине курмаççĕ. Тавах, вĕсене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтернĕ. Ĕçсе таврăнас йăла çамрăк чухне Сашăн пачах çукчĕ. Мĕн пур укçи-тенкине арăмĕпе ачисемшĕн перекетлетчĕ вăл. Уявсенче сыпман мар-ха хаярріне, анчах ку таранччен иртĕхмен. Хăçантанпа ĕçет ĕнтĕ. Иртнĕ уйăхра ĕç укçинчен те пĕр пус та памарĕ.

Шăкăрт-шăкăрт! илтĕнчĕ алăк тепĕр енче. Алли итлемест пулинех – упăшки тӳрех уçса кĕреймерĕ. Ытти чухне хирĕç тухаканччĕ арăмĕ. Паян унăн вырăнтан та хускалас килмерĕ. «Мăшăрăм, каçар! Кăштах лартăмăр та...» – тенине илтес килми пулса çитнĕ. Юлашки вăхăтра калама çук йĕрĕнтерет тата мăшăрĕ. Гальăн унăн çывăхне те пырас килмест.

– Савниçĕм, кĕтместĕн-им? – аран-аран тухрĕ Саша сасси. – Эпĕ вара çитрĕм, – терĕ те алăк умĕнчех тӳнчĕ пулмалла. Ӳкнĕ сасă пулчĕ.

Халĕ те вырăнтан хускалмарĕ Галя. Темшĕн паян унăн пач урăхла пулас килчĕ. Ӳкинех упăшки, вырттăрах... Ăна мĕн ĕç?

Таçтан иртни аса килчĕ. Вун çиччĕреччĕ вăл ун чухне. Техникумра вĕренетчĕ. Кӳршĕ ял каччи урама чĕнсен – килĕшетчĕ. Уçăлса çӳретчĕç, шӳтлетчĕç-калаçатчĕç. Пĕр сăмахпа – юрататчĕç. Мишăна салтака та ăсатрĕ вăл. Анчах... кĕтсе илеймерĕ. Галя çулĕ çине Саша килсе тухрĕ те ăшĕнчи кăмăл-туйăмне пĕтĕмпех арпаштарчĕ. Саврĕç пĕр-пĕрне, часах çемье те çавăрчĕç. Миша-и? Ку хыпара пĕлсен вăл таврăнмарĕ. Аякри çĕртех тĕпленчĕ.

Килĕштерсе пурăнатчĕç Гальăпа Саша. Ним çукран хирĕçес-тавлашас йăла та çукчĕ вĕсен. Тĕпсĕр эрех пички пĕтĕмпех аркатрĕ. Ара, урă кунĕ юлмарĕ-çке. Юрату ăçтан упрантăр? Мăшăрĕн малтанхи çепĕç йăл кулли пичке тĕпне пытаннă пек арçын унтан хаяр шĕвеке сăвăрчĕ те сăвăрчĕ. Хĕрарăм вара кашни сыпкăмран сивĕнсе те сивĕнсе пычĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**



## Кӳршӗсем

Лидия САРИНЕ

Калав

Кӑçал эпӗ канатӑп. Пахчара нимех те шӑтмарӗ. Çӗр улмисӗр пуçне. Вӑл та пулин çӗр айӗнчех пиçсе кайрӗ. Ара, вӗри кӗл пек çӗр çинче ӑçтан çимӗç пултӑр? Кишӗр виçӗ хутчен акрӑм – "нетушки". Çарӑк акрӑм – "шиш горох". Пӑрçи шӑтрӗ-ха кӑштах. Сакӑр вунӑ пуç купӑста лартрӑм – кӳршӗсен чӑххисем çисе ячӗç. Нимӗн те хӑвармарӗç вӗт. Купӑстине çеç те мар, тунине те таккаса ячӗç. Кил хуçисем чӑххисене çитермеççӗ те, вӗсен ирӗксӗрех пирӗн пахчара тӑранса пурӑнма тивет. Купӑстине те, хӑяра та пӗтерчӗç. Кӑçал пӗр хӑяр та тутанса кураймарӑмӑр. Эх, тамаша, каласан çын ӗненес çук. Хӑярсене çисе пӗтерчӗç, тӑрӑхла кавӑна тапӑнчӗç – нимӗн те тиркемеççӗ.

Сарӑ та пылакскерне чӑх-чӗп питӗ кӑмӑлларӗ курӑнать. Тепӗр енче пурӑнакан кӳршӗсем каланӑ тӑрӑх – кашни кунах кӑтиклеççӗ, çӑмарта тӑваççӗ. Пирӗн ялсем мар вӗсем, урӑх çӗртен куçса килнӗ. Каярахпа, çумӑр çусан, çарӑк шӑтса тухрӗ-ха. Юрать ӑна чӑххисем çиеймеççӗ. Çарӑкран яшка пӗçерейместӗн-çке-ха. Хулара пурӑнатпӑр та яла канмалли кунсенче çеç каятпӑр. Мӗн тухлӗ укçа пӗтет яла çӳресе, усси вара...

Пур пӗрех каяс килет çуралнӑ киле. Кунти йывӑçӗ, тӗмӗ, мунчи, сакки, лавкки, милӗкӗ... – пурте хамӑрӑн. Аякри ачалӑх, аттепе анне пурӑннӑ вӑхӑт аса килет. Эх, пурӑнӑç! Кунта килсен чун уçӑлать, хӑш чухне пӑшӑрханмалли тупӑнсах тӑрать пулин те. Ну, мунча кӗрсе савӑнатпӑр ӗнтӗ. Çӗнӗ милӗкпе çапӑнса киленетпӗр, чей ӗçетпӗр. Кӳршӗсемпе, анчах чӑххисене чарманнисемпе мар паллах. Хайхи, Светлана Асамат юррине "Чей ӗçесчӗ пылпала..." шӑрантаратпӑр. Çӗнӗ пылпа хӑналаççӗ те пире кӳршӗсем.

Ӗнтӗ кишӗр кӑлармалли çеç юлчӗ. Çӗр улми нумай тухмарӗ. Пиçсе кайнисене миххе тултартӑмӑр та выçӑ чӑхсене кайса патӑмӑр. Ыр курччӑр-иç. Вӗсем айӑплӑ мар вӗт. Хырӑм пурин те выçать.

Тепӗр канмалли кун та яла кайрӑмӑр хайхи. Чун туртать та-ха. Пире вӑрçма кӳршӗ персе те çитрӗ.

– Çӑмарта çисе тӑранмарӑр-и? – тет. Шак хытса тӑратӑп. Куç чарӑлчӗ.

– Мӗнле çӑмарта? – вӗчӗрхенме тытӑнатӑп сисмесӗрех.

– Çерçи çӑмарти мар паллах! Куракӑн та мар. Пирӗн чӑх çӑмартисене çиетӗр!

– Мӗскер тетӗн? Ӑçта? Хӑçан?

– Ним пӗлмене персе ан тӑр, – хӗремесленсе кайсах кӑшкӑрать хура халат тӑхӑннӑ кӳршӗ хӗрарӑмӗ. – Çӑмарта çисе пурӑнатӑн. Ямӑтти тутлӑ-и?

– Мӗнле апла? Эпӗ санӑн çӑмартусене çиетӗп-и?

– Манӑнне мар паллах. Чӑхӑнне. Манӑн ӑçтан çӑмарта пултӑр?

– Ах, эсӗ çапла-и-ха? – çилӗ килсе тухрӗ манӑн. – Санӑн чӑххусене пула эпӗ купӑста-хӑярсӑр юлтӑм. Ытти çул сакӑр вунӑ пуç купӑста касса тӑварланӑ, нӳхрепе лартнӑ, хӗлӗпе çисе пурӑннӑ. Кӑçал – "фигушки"! Чӑххусене чармастӑн!

– Эс чарса пӑх-ха вӗсене! – аллипе сулкалашса кӑшкӑрать вӑл. – Эпӗ айӑплӑ-и вӗсем сирӗн пахчана чупнӑшӑн? Çӑмартасене кӑларса пар!

– Ӑçтан кӑларса парас? Манӑн килти çӑмарта çуккӑ. Хула çӑмарти пур.

– Тен, хула çӑмарти мар – пирӗн?!

– Унта пичет пур. Ӗненмесен – кӑтартатӑп. Шыра. Тен, ӑçта та пулсан тӑваççӗ? Тӗрӗсле! Туп!

– Тӗрӗслетӗп те! – пӳртрен тухрӗ кӳршӗ. – Кур-ха, хуларан килеççӗ те...

– Атя, шыра. Шыракан тупать тет, – йӗкӗлтерӗм ӑна.

Ах, чӗлхерен кам туртрӗ-ши? Тупрӗ вӗт! Шырарӗ-шырарӗ те – тупрӗ. Чиесен хушшине кӗрсе пӑхрӗ, унтан - вӗлтӗрен ӑшне кӗрсе кайрӗ те вутӑ сарай хыçӗнче вӑрӑм курӑк хушшинче иккен чӑх йӑви.

– А-а-а! Тытрӑм-и вӑрра? – хӗпӗртесе кӑшкӑрса ячӗ хайхи. – Акӑ чӑхсем ӑçта çӑмарта туса пурӑннӑ.

Тӗлӗннипе нимӗн те чӗнеймерӗм.

– Чӗлхӳне çӑтса ятӑн-им? Намӑс та мар-и? – хӗрӳленсех пырать кӳршӗ.

– Тӑхта-ха, – тетӗп хайхине куçран шӑтарас пек пӑхса. – Эпӗ кунта мӗнле айӑпа кӗтӗм? Санӑн чӑххусем пирӗн патра çӑмарта тунишӗн эпӗ...

– Вӑт! Вӑт! – аллине пилӗк тӗлне тытса тавлашать вӑл. – Чӑхсене эсӗ астаратӑн.



– Чарӑн, – алӑ султӑм эпӗ. – Эпир çисех пынӑ пулсан кунта çакӑн чухлӗ çӑмарта пухӑнатчӗ-и? Э?! Кур-ха, кунта утмӑл-çитмӗл те пур пулӗ. Санӑн çӑмартусене курман, тытман.

– Манӑн, хӗрарӑмӑн, çӑмарта çук, – сасси сасартӑках йӑвашланчӗ унӑн.

– Çӑмартусене пуçтар та – вӗç кунтан, – терӗм ӑна. – Чӑххусене кала, тек ан килччӗр пирӗн пата. Урисене çапса хуçатӑп. – Хайӗн йӑнӑшне ӑнланчӗ пулас, тек шарламарӗ. Çӑмартине карçинккапах пуçтарса кайрӗ. Тинех лӑплантӑм. Ара, пире ахалех айӑплать.

Чӑх-чӗп ӗлӗкренех кӳршӗ-арша вӑрçтарнӑ. Тепӗр тесен, пирӗнтен тухман. Эпӗ хама пӗрре те начар çын тесе шухӑшламастӑп. Çӗнӗ кӳршӗсемпе те, тен, пӗр чӗлхе тупӑпӑр.

Пахчара уçӑ сывлӑшра апат пӗçерес килсе кайрӗ-ха. Пӗр хуран çӗр улми шуратса çакса ятӑм. Эх, мӑкӑрланать. Апат вӗрет. Çӗр улмипе пулӑ юрататӑп эпӗ. Хӑяр çук. Мӗн тӑвас? Хурана тӑвар яратӑп. Эх, епле паха çӗнӗ улма! Ав, кӳршӗ чупса каçрӗ. Пӗр чашӑк тин тӑварланӑ хӑяр çӗкленӗ. Эй, пурнӑç кайрӗ те...

– Ку малтан татниех, юрать тӑварлама ӗлкӗртӗм, – тет кӳршӗ. – Халӗ, санӑнне çисе янӑ хыççӑн, пирӗн пата çитрӗç.

– Чӑнах-и?

– Чӑнах пулмасӑр. Чӑххисем пӗр иленсен...

– Эпӗ тытман çӗртех "çӑмарта вӑрри" ят илтрӗм, – каласа кӑтартатӑп ӑна. Иксӗмӗр те кулатпӑр.

– Эх, сывлӑш епле уçӑ, туятӑн-и?

– Туятӑ-ӑп. Сывласа тӑранаймастӑ-ӑ-ӑп.

– Çӗр улми пиçрӗ. Çиейӗпӗр-и? Тӑхта, çӑмарта пиçрӗ, илсе килем. Ан васка. Эпӗ наччас... Хире-хирӗç ларатпӑр симӗс курӑк çине. Çӗр улми пӑсланать.

– Юрать эсир пур, килетӗр, унсӑрӑн кичем. Унта пушӑ пӳрт, кунта пушӑ... Тавралӑх юхӑнать. Чун ыратать. Айяй...

– Çапла-а. Пушӑ пӳрт чылай çав, – унпа килӗшетӗп эпӗ. Эх, ӗлӗкхипе танлаштарсан...

– Ял пӗтсе пырассӑнах туйӑнать, темле... пӗрре те савӑнтармасть.

– Çапла ça-ав. Ах, анча-ах. Пурнӑç мӗнле улшӑнать.

– Ну, атя, çийӗпӗр.

– Тавах, – йӗри-тавра пӑхса тимлӗн сӑнатӑп. Улма сачӗ тӑкӑнса ларать. Пан улмийӗ епле шултра. Хурӑнсем, вӑтӑ тирексем кашлаççӗ. Кайӑк-кӗшӗк сасси илтӗнет...

Атте-анне пуçран лӑпканӑнах ӑшӑ çилӗ кас-кас вӗрсе иртет. Чунра калама çук лӑпкӑ.

Пур-ши çакӑнтан ырри çак тӗнчере? Çак самантра манран телейли пур-ши тата?

## Чикан

Куçинкке автобусран анса юлчӗ те киле май çул тытрӗ. Çурӑмӗ çинче – кутамкка, аллинче – çатӑрка пысӑк хутаç. Шупашкартан таврӑнать-ха вӑл. Сӑн-пичӗ хаваслӑ. Кутамкка тулли кучченеç пурри питӗ паха-ха, анчах унран та ытла ачисем кашнинчех тарават пулнишӗн, пӗр-пӗрине шӑкӑл-шӑкӑл пурӑннишӗн кӑмӑллӑ ашшӗ. Паллах, çавӑншӑн амӑшӗн тӳпи уйрӑмах пысӑк пӗлтерӗшлӗ, тӗп вырӑнта пулнине те лайӑх ӑнланать ватӑ.

Акӑ Куçинкке салари аслӑ урама çитрӗ. Кӗрхи вичкӗн çил самаях кастарать. Тӗрлӗ тӗслӗ çулçӑсене тата-тата аяккалла вӗçтерет, унталла-кунталла сапалать. Культура çурчӗн тӗлӗпе иртнӗ чухне ун умӗнчи йывӑç карталлӑ пӗчӗк пахчара хура качакана асӑрхарӗ хайхи. Илемлӗ пӗчӗк чӑрӑшӑн черченкӗ турачӗсене çатӑрт-çатӑрт тата-тата çӑвар тулли хыпать вӑл. Эх, тутлӑн чӑмлать те вара. Сывӑхне никама пыртарас çук.

– Эй! Сӑтӑрçӑ, намӑс мар-и сана çавнашкал чиперккене амантма? Курӑр-ха епле хуçаланать вӑл ют пахчара! – сӑмахласа ун патнелле утрӗ ветеран, выльӑха хӑвалама пикенчӗ. Качака ӑна илтмест те, курмасть те тейӗн. Хайхи хӑйне хӑратма пикеннине туйсан тӑрук çаврӑнчӗ те йӗкӗр чӗрнисене шӑкӑрт-шӑкӑрт! шӑкӑртаттарса палламанскере хирӗç патваррӑн пычӗ. Çакна пачах кӗтмен старик нимӗн тума аптранипе ун-кун пӑхкаларӗ, хутаçӗпе хӑлаçланса илчӗ. Ку пушшех килӗшмерӗ-тӗр вӑрӑм сухала: хутаçа шӗвӗр мӑйракипе çаклатса витӗр кӑларчӗ – тӑватӑ шӑтӑк пулчӗ. Лӑпланма пӗлмен çиллемес хӑрт-хартлатса арçын тавра çаврӑнчӗ, Куçинкке патак тавраш шырарӗ.

– Ан çывхарнӑ пул, путсӗр... Сухалу вӑрӑм та, ӑсу чӑнахах кӗске çав, – теме ӗлкӗрчӗ кӑна, кӑтӑркка кайри урисем çине тӑчӗ, хӑйне вӑрçакана вирлӗн тӑрслаттарма хатӗрленчӗ. Арçын айккинелле пӑрӑнсанах ун умне тӑлт! анчӗ тӑватӑ ура. Хутаçа тӑрмаласа йӑлт шӑтарса пӗтерчӗ. Пашкаканах пулчӗ кутамкка ватӑ. Эх-эх-эх. Унӑн вырӑнӗнче тепри пулнӑ тӑк шарламасӑр иртсе каятчӗ-тӗр, анчах таса чунлӑ Куçинкке кӑлтӑка асӑрхатех çав. Çитменнине вӑл мӗн тери юратать çут çанталӑка. Уншӑн чунне пама хатӗр. Ахальтен мар ачисем те ашшӗ-амӑшӗ пекех хисеплӗ те ятлӑ çынсем.

Çывӑхра никам та курӑнмасть. Куçинкке кил еннелле утма хатӗрленнӗ хушӑра: «Чикан! Чикан! Чикан!» – йыхӑрни илтӗнчӗ çулӑн тепӗр енче. Качака «Меке-е-ек» – терӗ те хуçи патнелле вӗçтерчӗ.

**Альбина ВАСИЛЬЕВА.**

### ШӲТЛЕС ТЕРӖМ

## Энӗш-Çавал хутлӑхӗнче

Анаткасси – Шуршӑл çумми,
Пахчи-пахчийӗ – пан улми!..

Этнескерӗ тӗмеске,
Пулман нихçан
мӗскӗнскер.

Урхас Кушкӑ вӑрманӗнче
Паян улшӑннӑ тӗнче...

Чӑшкасси ун хӳттипе
Ларать пӗр урамӗпе.

Мӗшӗл мӗншӗн сӗм çӗрле
Пачах хӑратмасть хӗлле?

Мӗшӗлте пач ӳркенмеççӗ,
Ялан кӑмпара çӳреççӗ.

Караньял тахçан тустарнӑ,
Пӗтӗм таврана пӑлхатнӑ.

Кукашни – паттӑр кашни,
Ыр ят-сум çеç тивӗçни.

Макаçкасси – малашлӑхшӑн,
Кашни çемье –
çӗр-шывӑмшӑн.

Лапри Чӑрӑшкасси-сасси,
Упрать халь те тимӗрç лаççи.

Вӑрман Кушкӑ вӑранать,
Хӗрсех ӗçе тытӑнать.

Кирпӗч çапнӑ Уплерте,
Юлман йӗрӗ çырминче.

Шуршӑл – шурӑ
Шупашкар,
Иккӗшӗ те пит патвар.

Кайри Шӗнерпуç – кайрах,
Ун пекки, чӑн та, сайра.

Упакасси – упасӑр,
Иртен ӑна курмасӑр.

Тури Упакасси – тура,
Килӗрен – çӗнӗ пура.

Шуршӑлта пур
Лаприкас,
Ӗçшӗн çунаç ир те каç..

Сӗнтӗрпуçӗ вӑл – шыв пуçӗ,
Пуçланать унтан çӑл куçӗ.

Кайри Чиперуй – сайра,
Пурӑннӑ кунта майра.

Малти Чиперуй вара
Никӗсленнӗ маларах.

Истерекасси, тавсси!
Янӑрать пыл хурч сасси.

Макаçкасси малашлӑ,
Çамрӑкӗсем мӑшӑрлӑ.

**ТУСТИРИК Тули.**
Сӗнтӗрвӑрри районӗ.



# Савăнасах килмест

Икĕ упăшкапа пурăнса йăлăхрăм. Теприсем кун пирки ĕмĕтленме те пултараймаççĕ пулĕ. Ман тĕле çак «телей» кĕтмен çĕртен татăлса анчĕ. Йĕркипех каласа парам-ха.

Тăванăм çур çуллăха ют çĕр-шыва тухса кайрĕ. Эпĕ килĕшессе кĕтсе тăмасăрах мана кушаккине, пахчине, килти чечекĕсене /вĕсем тата мĕн чухлĕ! Хваттерĕнче çĕтсе кайăн: ура пусма вырăн çук/ парса хăварчĕ.

Ку анчах-и? Мăшăрне те пăхма хушрĕ. Упăшки вара манăннинчен пĕрре те кая юлмасть, ирттерет те... Тем ан шухăшлăр: эрех ĕçессипе. Ĕçсен вара иккĕшĕ те ик енчен: «Юрататăп», − тесе кăшкăраççĕ. Пĕри − чăвашла, тепри − вырăсла. Вырăсла калаçаканни хамăн-ха. Хулара ӳснĕ вăл. Ĕçсе ӳсĕрĕлнипе чĕлхи сӳтĕлнĕскер: «Я тея люлю», − текелет. Лешĕ те унран юлмасть: çав сăмахсенех − чăвашла...

Савăнмалла пек, анчах манăн, темшĕн, савăнасах килмест. Мĕншĕн тесен иккĕшĕнчен те икĕ пуслăх усси çук: пĕтĕм ĕçе хамăн тăвас пулать.

Ирпе ирех ĕçе чупатăп. Ĕç хыççăн − пахчана. Кăçал тата хăярĕ-помидорĕ, тепре лартма тиврĕ пулин те, ăнăçлă пулчĕ, тăварласа çитер кăна... Çĕрлеччен чавалатăп. Ара, икĕ упăшкана тăрантарас пулать вĕт... Аякри тăванăм вара упăшки çинчен пĕр сăмах та ыйтмасть. Ăна пахча çимĕç мĕнле ӳсни çеç интереслентерет.

Ку çулла пулнăччĕ ĕнтĕ. Манăн ĕçсем мĕнле пынине пĕлес тесе шăнкăравларĕ аякри тăванăм. Эпĕ тыт та кала хăяра тепĕр хут лартма тивнине. «Шăвармастăн», − тесе вăрçса пĕтерчĕ вĕт. Юрать-ха, телефонпа çеç. Сӳнтерсе хутăм. Тата мана кашни чечекĕ ӳкерттерме ыйтрĕ çурăлмассерен фотоаппаратпа ӳкерсе компьютерпа ярса пама хушрĕ. Хăçан хăш чечекĕ çурăласса пĕлсех тăрать тата, улталаймăн. Ку хутĕнче эпĕ чеерех пултăм: чечекĕсем çурăлмасан та кӳршĕсенне кайса ӳкерсе ярса парсах тăтăм. Тăванăм та кăмăллă, хамăн та чунăм лăпкă. Вăл пур пĕрех хĕл лармасăр килмест.

Юр айĕнче нимĕн те курăнмасть. Çуркуннеччен ăçта мĕн лартнине те манса кайĕ. Эх, юр часах çума пуçларĕ тата. Пĕррехинче кишĕр кăларма кайсан йăрана тупаймасăр каялла таврăнма тиврĕ: пахчипех юр выртать. Ку темех мар-ха, хăвăртрах тăванăм килтĕрччĕ, хăвăртрах упăшкине тавăрса парасчĕ: йăлăхтарса çитерчĕ. Анчах та çур çул хушшинче мăшăрĕ çинчен пачах та аса илменскер, ăна каялла йышăнĕ-ши?

# Икĕ кушак

Ытла та кăсăклă иртеççĕ кунсем: кашнинчех мĕнле те пулин камит сиксе тухатех. Акă, тĕслĕхрен, паян ĕçрен килтĕм те алăк умĕнче Мурка ятлă кушакăм ларнине асăрхарăм. Çав тери ыйтуллăн пăхать кусран. Çиесси килет пулĕ-ха. Çиччас, хаклăскерĕм, сана пулă çитерĕп... Ĕнер кăна атарласа икĕ кило шăнтнă пулă туяннăччĕ. Васкасах сивĕтмĕш алăкне уçатăп. Ак тамаша... Пĕр пулă та çук. Ара, ăçта кайса кĕнĕ? Мĕнле сивĕтмĕш пулчĕ ку? Нимĕн те тăмасть унта: йăлтах, шăмми-шаккипех, ирĕлсе каять.

Апат-çимĕç ăçта кайса кĕнине кăштах чухлакалатăп-ха... Икĕ уралă кушак аçин − Михалян ĕçĕ ку. Гороскоппа та кушак çулĕнче çуралнă та... Чăн-чăн кушак аçиех çав. Ара, кунĕпех диван çинче хуп турттарать, ниçта та ĕçлемест. Каçхине вара кухньăна «сунара» тухать. Çĕрле аванрах çав: никам та чăрмантармасть.

Упăшка çинчен пырать-ха сăмахăм. Мăшăр тени тĕрĕсех те мар-ха та... Экс-упăшка теççĕ-и-ха вырăссем? Унпа уйрăлнăранпа 15 çул та иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Виçĕ хутчен те авланса пăхрĕ, çапах ман патах таврăнать. Эпĕ çав тери лайăх-ши е ытти хĕрарăм хаклама пĕлмест-ши?

Эй тата... Çав киревсĕр кахал Михаля çинчен калаçса çăвар тутине те сая ярас килмест-ха манăн.

Килти пĕртен-пĕр юратнă чун − кушакăм − çинчен сăмахлама кăмăллăрах. Михаля хăйне ăслă тесе шухăшлать пулĕ-ха та, кушакăм та ухмах мар çав... Акă кур-ха: Михаля пӳлĕмĕнчен кăлпасси татки сĕтĕрсе те тухрĕ. Эх, маттур та! Пурăнма пĕлет çав. Лешĕ сиссе те юлмарĕ курăнать. Пĕрмаях çапла: Михаля сивĕтмĕшрен Мурка кушакăм валли илнĕ апат-çимĕçе йăкăртать. Лешĕ вара − Михалянне. Хырăм выççи пурне те чеелене вĕрентет.

**Зоя СЫВЛĂМПИ.**

# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



**Сылтăмалла:** 5. Вĕçен кайăк. 6. Тинĕсри транспорт. 9. Тринкки-тринкки сикекен. 10. Студентсен вĕренӳ çулĕ. 12. Вăл линкка-линкка авкаланма кирлĕ. 13. Литература жанрĕ. 16. Йывăç. 17. Килька евĕр пулă. 18. Океанри хурах. 19. Шурлăх кайăкĕ. 24. Ăна мунчана илеççĕ. 25. Çĕнтерӳ ...ĕ. 26. Çĕнĕ мар. 27. Редакци ĕçченĕ. 29. Чиновниксен штачĕ. 30. Ĕлĕкхи налук.

**Аялалла:** 1. Ч.Айтматов кăтартса панă ăссăр çын. 2. Тухăçа хирĕç. 3. Маччана пăхать. 4. Ят-шыв палли. 7. Майракаллă чĕр чун. 8. Тинĕсри «çăлăнăç». 11. Паллă хоккеист: Олимп, тĕнче тата çĕр-шыв чемпионĕ. 12. Ют япалана куç хывакан. 14. Хăшĕн-пĕрин вăл хупăнма пĕлмест. 15. Пахча çимĕç. 20. Пĕр-пĕр япала çыххи. 23. Вăл пĕве хĕррине тайкаланса утать. 27. Те çын, те пулă... 28. Шоферăн «савнийĕ».

**Пĕр арçын йытă сутать.**

**– Çырĕп сывлăхлă-и? – кăсăкланать илекен.**

**– Паллах.**

**– Ăслă-и?**

**– Çапла.**

**– Шанчăклă-и?**

**– Ан та иккĕленĕр. Пиллĕкмĕш хут сутатăп ĕнтĕ – çаплипех киле таврăнать.**

* * *

**– Санăн мăшăру туй кунне ас тăвать-и?**

**– Телее, çав самант унăн пуçĕнчен тухса ӳкнĕ.**

**– Эсĕ кӳренместĕн-и?**

**– Çук паллах. Çавăнпах эпĕ унран çултăлăкне темиçе хут парне илетĕп.**

* * *

**Хĕрарăм ĕçе вырнаçма килнĕ.**

**– Çак вырăнта ĕçлекенни ăçта кайнă? – кăсăкланать вăл.**

**– Декрет отпускĕнче.**

**– Тем, шиклентерет мана кунта...**

* * *

**– Онегин патне янă Татьянăн çырăвне Татьяна çырман. Эсир çакна пĕлнĕ-и?**

* * *

**– Петĕр, кала-ха, мĕн пулнă?**

**– Мана институтран кăларса ячĕç.**

**– Ан макăр, Петĕр! Салтаксем макăрмаççĕ.**

* * *

**– Эсир мĕншĕн çаплипех авланман? – ыйтаççĕ ват хусахран.**

**– Çамрăк чухнех тĕрĕс арăмпа паллашма шухăш тытнăччĕ. Темиçе çултан тин шыраса тупрăм ăна. Анчах вăл та тĕрĕс арçын шырать иккен.**

* * *

**– Тĕлĕнмелле, сире ташша чĕнсен кĕвĕ кĕскерех пек туйăнать.**

**– Çапла пулмасăр, оркестрпа манăн упăшка хуçаланать вĕт.**

* * *

**Хĕрарăм сĕрме купăс калать.**

**– Çитĕ ĕнтĕ. Çĕнĕ кĕпе илсе парăп сана, – тет упăшки.**

* * *

**– Ачасем, "Война и мир" ромама кам вуланă?**

**– Ăна вуламалла пулнă-и?**

**– Паллах.**

**– Эпĕ вара ăна çырса илтĕм.**

* * *

**– Каçарăр та... эсир манăн вырăна ларнă.**

**– Санăн вырăн-и? Çакна мĕнле çирĕплететĕн?**

**– Эпĕ çакăнта мороженăй хăварнăччĕ.**

* * *

**Хĕр повара вĕренет.**

**– Хăвăр пĕçернĕ апат-çимĕçе тутанса пăхатăр-и? – пĕлесшĕн амăшĕ.**

**– Тутанса пăхнă пулсан юрĕччĕ, йăлтах вăйпа çитерсе яраççĕ.**

* * *

**– Качча тух мана.**

**– Хаваспах.**

**Калаçу татăлать.**

**– Эсĕ мĕншĕн чĕнместĕн, чунăм?**

**– Ахаль те шухăшламасăр каларăм пулмалла.**

* * *

**Тахçанхи пĕлĕшсем тĕл пулнă.**

**– Кăçал Турцире пултăм, – тет пĕри.**

**– Эпĕ юлашки çулсенче Турцире те, Германире те, Францире те каннă.**

**– Ăçта ытларах килĕшрĕ вара?**

**– Татăклăн калаймастăп. Эпĕ арăмпа тата ачасемпе пĕрле пулнă та...**

* * *

**"Лайăх апатланмасан начарланма ăçтан вăй çиттĕр-ха?" – сĕтел хушшине кĕрсе ларать хĕрарăм.**

* * *

**Амăшĕпе хĕрĕ лавккара утаççĕ.**

**– Мĕн те пулсан илсе памалла-и? – ыйтать амăшĕ.**

**– Паллах.**

**– Мĕн кирлĕ сана?**

**– Хальлĕхе мĕнне пĕлместĕп. Анчах кирек мĕн пулсан та пĕрре мар, тӳрех – иккĕ.**

* * *

**Экзамен пырать. Вĕрентекене пĕр пеклĕх йăлăхтарсах çитернĕ.**

**– Аудиторире миçе лампочка? Пĕлетĕн тĕк – "5" паллă лартăп, – тет пĕчен юлнă студента хайхискер.**

**– 10.**

**– Тĕрĕс мар, 11, – кĕсйинчен лампочка кăларать вĕрентекен.**

**Студент тепĕр хут экзамен тытать. Вĕрентекен каллех çакнашкал ыйту парать.**

**– 11 лампочка, – пĕр иккĕленмесĕр хуравлать çамрăк.**

**– Йăнăшатăн. Ку хутĕнче хамăн лампăчкăна чиксе тухман.**

**– Эсир чикмен пуль-ха, анчах эпĕ илсе килнĕ, – çухалса каймасть студент.**

* * *

**– Йăлăхтарса çитерчĕ, уйрăлатăп, – кăшкăрашать хĕрарăм.**

**– Йĕркеллех пурăнаттăрччĕçке. Мĕн пулчĕ? – пĕлесшĕн пĕлĕшĕсем.**

**– Упăшка ĕçет, туртать, усал сăмахсемпе перкелешет...**

**– Эсĕ унпа мĕншĕн çемье çавăрнă вара?**

**– Айван пулнă.**

**– Кур-ха, çав çын сана, айвана, качча илнĕ вĕт-ха.**

* * *

**– Хĕрĕм, урок турăн-и?**

**– Çук.**

**– Апла тăк мĕншĕн сывăрма выртрăн?**

**– Анне, сахалрах пĕлекен çын лăпкăрах сывăрать.**

* * *

**Тĕпренчĕкĕ печени çисе янă вăхăтра амăшĕ çăвăнма, тумланма, çӳç турама, апатланма, савăт-сапа çума ĕлкĕрет. Декрет отпускĕнчи хĕрарăмпа салтак танлашаять-ши?**

* * *

**– Çĕр! Çĕр курăнать!**

**– Ан кăшкăр-ха, пирĕн пăрахут халь кăна пристаньрен тухрĕ.**

**☺И-ХИ-ХИК☺**

# Давление? Болят суставы? Остеохондроз?

**Феноменальный "БИМАГ" готов вам помочь!**

**Мучаюсь суставами и давлением больше 35 лет. На таблетки уже надежды нет. Посоветуйте какое-нибудь средство, которое помогает. Но недорогое. Спасибо.**
**М.С. Степанов, 75 лет, г. Ядрин**






Реклама.

**"БИМАГ" - это удивительный прибор от учёных Санкт-Петербурга. Очень компактный и лёгкий, но при этом "БИМАГ" может стать отличным помощником при лечении таких грозных заболеваний как: гипертония и стенокардия, артриты и артрозы, остеохондроз и многих других болезнях. Прекрасно когда в твоей жизни появляется надёжный союзник в борьбе с недугами. Так воспользуйтесь им!**

**Наконец-то это случилось. Наука отсеяла весь мусор и появился удивительный прибор, который действительно РАБОТАЕТ! Он может дать исцеление утомлённому болезнями человеку и вернуть ему радость здоровья. Феноменальный "БИМАГ" готов помогать вам с первых минут. И вы будете поражены "талантами" этого прибора!**

**Гипертония, артриты, артрозы, нарушение сна, неврологические расстройства вот лишь малый перечень заболеваний, поддающихся лечению "БИМАГ".**

**"ДОКТОР" ВСЕГДА С ТОБОЙ**

Представьте, что где бы вы не находились: дома, на работе, в саду, с детьми или внуками вы носите с собой крохотного доктора. В любое время вы можете заказать своему "мини-доктору" необходимое именно вам оздоровление. И представьте, что этот доктор всегда свободен для вас. Вряд ли вы в жизни встретитесь с таким миниатюрным доктором, но есть кое-что не уступающее ему. Знакомьтесь, биполярный аппликатор от учёных Санкт-Петербурга - "БИМАГ"!

**ТЕПЕРЬ ВЫ МОЖЕТЕ...**

"БИМАГ" мощный и эффективный источник для оздоровления, в прочном и компактном корпусе. К примеру, за несколько недель использования "БИМАГ" вы можете нормализовать давление. Ведь даже у гипертоников с многолетним стажем давление, как правило, приходит в норму. Вы можете избавиться от болей в суставах и спине. Вы можете сделать свой сон крепким и спокойным. Вы можете не просто избавиться от хронической усталости, а еще укрепить сердце и нервы.

Вы можете с высокой эффективностью применять "БИМАГ" при борьбе с такими грозными заболеваниями, как:

**- заболевания опорно-двигательного аппарата:** остеохондрозы, болезни суставов, артриты, артрозы, обменные полиартриты, миозиты.

**- заболевания сердечно-сосудистой системы,** особенно эффективен "БИМАГ" в борьбе с гипертонией-этим "тихим и таинственным убийцей", вегето-сосудистая дистония.

**- неврологические, нервно-психические расстройства:** болевые синдромы, постоянные головные боли, стрессовые состояния, неврозы, нарушения сна, повышенная утомляемость и т.д.

Используется "БИМАГ" и мужской частью населения, для решения так называемых "мужских" вопросов. Вообще методика применения "БИМАГ" насчитывает более 30-ти недугов. Подробнее вы можете ознакомиться с "БИМАГ"на www.pro-bimag.ru

Когда вы начнете пользоваться "БИМАГ" и почувствуете силу его восхитительных потоков, которые буквально "смывают" ваши болезни, то вы, пожалуй, выбросите старые и неэффективные приборы. Пользуясь "БИМАГ" вы можете почувствовать, возможно, впервые, что такое действенный прибор для оздоровления. Но, возможно, самой большой выгодой может стать гигантская сумма денег, которую вы сейчас тратите на таблетки вовсе не такие безобидные для здоровья. Ведь бездумный приём лекарств или "волшебных" добавок неизвестного происхождения могут оказаться бомбой замедленного действия, которую вы добровольно принимаете внутрь. Совершенно иное дело "БИМАГ" - никакой химии, никаких проводов и дополнительных затрат. **ФЕНОМЕН "БИМАГ"!**

"БИМАГ" уникален настолько, что, даже если вы лечите только гипертонию, то попутно, за счёт улучшения переноса кислорода клетками, ваши мышцы могут окрепнуть, улучшится осанка, укрепится сердце, хотя вы и не ставили перед собой такой цели. Два магнитных потока "БИМАГ" дадут вам тот эффект, который в данный момент вам необходим.

**"ГОРЯЧИЙ"** или (южный) поток "БИМАГ" даст вам возможность повысить активность клеток организма (при этом происходит: повышение энергии, увеличивается количество красных кровяных клеток, происходит расширение сосудов, стимулируется циркуляция жидкостей и кровообращения, снижается кровяное давление, возрастает активность сердца, улучшается регенерация тканей).

**"ХОЛОДНЫЙ"** или (северный) поток, напротив, замедляет активность клеток (происходит: замедление роста опухолей, останавливается кровотечение, улучшается усвоение кислорода тканями, замедляется пульс).

Если вы устали от болезней и таблеток вы можете попробовать в действии феноменальный "БИМАГ". Если вы будете сидеть на месте и ждать, пока кто-то другой решит все проблемы с вашим здоровьем, то станет не плохо, а еще хуже. Знакомство с этим прибором позволит вам сказать: "Я рад, что приобрел "БИМАГ". Закажите "БИМАГ" сегодня, чтобы быть здоровым завтра! Здоровья вам!

Закажите "БИМАГ"
по телефонам:
**8(937) 873-52-55,**
**8(84235)60-100.**
(8.00-20.00 время московское)
Закажите "БИМАГ" почтой:
**433504, Ульяновская обл., г. Димитровград, а/я"БИМАГ", К-22**
Цена БИМАГ ~~2000 руб.~~
**990 рублей**
+ 290р. доставка почтой России + почт.сбор. (акция действует до 31 октября 2014 года).
Оплата при получении.
Подробнее читайте на
**www.pro-bimag.ru**
В заявке укажите ФИО, адрес и телефон.

Рег.уд. № ФСР 2011/10100 от 11.02.2011 года. Сертификат соответствия РОСС RU.ME95.H00221 от 01.03.2011. ИП Пимонов Александр Юрьевич. ОГРН 308 730 226 600 012 серия 21 № 001973170.

# ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ


## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 8-961-339-33-63.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 8-906-135-52-41.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**28.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**55.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**58.Гравмассу,** щебень, **песок,** керамзит, **бетон,** чернозём, **навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 8-902-327-75-85.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, бой кирпича.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**587.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. **Скидки.** Т.8-927-667-62-02.

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**513.Чистка колодцев. Т. 8-961-342-90-59.**

**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**636.ТРЕБУЮТСЯ** в Новочебоксарск **операторы ТПА** /обучение без отрыва от производства, з/п сдельная, график работы 2/2/. Т/ф: 73-03-08, 74-11-81.

## СУТАТĂП

**580.ÇУРТ** /газ, шыв пур/. **Элĕк р-нĕ, Вылпасар.** Т. 89278572354.

«ХЫПАР»
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редакторшăн – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7870. Заказ 3659.